КС(Чув)
С-31
23860-чув

*Михаил*
*СЕНИЭЛЬ*

# ЫТАРАЙМИ



Национальная библиотека ЧР
4-023860

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | м 23860чв | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

Кор
К С(Чув)
С31

*Михаил*
***СЕНИЭЛЬ***

# ЫТАРАЙМИ

Сăвăсем

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1981

84. 3 Чув
С 31

ПРОВЕРЕНО
20

М 23860-ЧУВ

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

**Сениэль М. П.**

С 31 Ытарайми: Сăвăсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1981.—80 с.
15 п.

**«Ытарайми» кĕнекене кĕртнĕ сăвăсенче паянхи çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕ, шухăшĕпе ĕмĕчĕ, юратăвĕпе телейĕ курăнать.**

84. 3 ЧУВ

С $\frac{0743-016}{М136(03)-81}$ 84—81
© Чăваш кĕнеке издательстви, 1981 ç.

## ТĂВАН ТĔНЧЕ

Чăваш тĕнчи, тăван тĕнче,
мана çĕршывăм умĕнче
паян çĕклетĕн, пăлхататăн,
инçе пăхмашкăн пулăшатăн,
курмашкăн пулăшан инçе.

Тăван чăваш, тăван чĕлхе,
ăс çивчĕшĕ те чун çуначĕ,
ватса пăрланчăк читлĕхе,
вутланчĕ-çке ĕмĕрлĕхе—
вутсем малта ырми çунаççĕ.

Ĕçлес, пурнас та хĕпĕртес,—
тек читлĕх вăхăчĕ килмест,
ахальтен мар çуралнă Ленин,
ахальтен мар Октябрь кĕрленĕ,
ахальтен мар халь те кĕрлет.

Çухалмĕ пирĕн çулăн йĕрĕ.
Çухалмĕ пирĕн тĕрĕ, юрă,
çухалмĕ сăн, чĕлхе, сăмах.
Çак пĕтĕм пурлăхăмăр юрĕ
çитмешкĕн коммунизмах.

Чăваш тĕнчи, тăван тĕнче,
тĕнче пĕр мар самантсенче
эп сан пĕтес кунна туймастăп,
çаплах пăхас, çаплах курас теп
инçе-инçе, инçе-инçе...

# САВРĂШ ПАТТĂР

Баллада

Ял çумĕнче — пăлхар масарĕ.
Çав масарта çыврать иккен
хальччен çĕрмесĕр Саврăш паттăр —
чăваш-сăвар тăхăмĕнчен.

Пĕлетпĕр — кам ăна вĕлернĕ,
пĕлетпĕр — мĕншĕн вилнине.
Вăл çĕр çине мĕскер хăварнă?
Хăварнă вăл ўкĕнĕçне.

Çав ўкĕнĕç хальччен çўрет-мĕн.
Хальччен те Саврăш каçарма
пултараймасть хăйне, çунать вăл.
Тăпри ун йывăр, çăмăл мар.

Кашни çурах, пур йывăç-курăк
кĕç пуçласассăн ешерме,
чул айĕнчен сиксе тăрать вăл
çилçунатне йĕнерлеме.

Юлташĕсем сиксе тăраççĕ.
Ăçта васкаççĕ йĕкĕтсем?
Пўлер çулне тухаççĕ хăвăрт.
Васкаççĕ Пўлере вĕсем.

Пăлхар патшалăхĕ пĕтменччĕ.
Ун юлашки тĕп хулине
хўтĕлеме ĕлкĕреймерĕç,
çакланчĕç мăшкăл аллине.

...Шăп çур çĕр тĕлĕ. Шурă уйăх,
хура пĕлĕтсенчен хăпса,
Пўлер туне, ытараймасăр,
çап-çуттăн çутатса ярсан,

çĕм вăрмантан ӳтсем тухаççĕ
тăпăртатса çав ту умне,
анчах Пӳлер те, тăшмансем те —
ăçта? Кам тупĕ вĕсене?

Çук çичĕ ют та, çук Пӳлер те!
Çĕрпе танлашнă, кĕл пулса,
çич ĕмĕр тăприпе хупланнă.
Йĕрне тупаймăн шыраса.

Малтан çапла васкамаллаччĕ,
тен, пултараттăн хăтарма.
Халь васкани те, кулянни те
йăлт — ахале, йăлт — харама.

Чун çурасла ахлатрĕ Саврăш,
çĕре кайса ӳксе. Ăна
хĕрӳн вăл ыталарĕ, йĕчĕ
йăвалана-йăвалана.

Çĕр йăтайми хуйха салхуллăн
курса эрленнĕ тусĕсем
ут çавăтса утаççĕ шăппăн
вăрманалла, ĕсĕклесе.

Вăрман кашлать. Тапранчĕ тăвăл.
Тӳпе хупланчĕ пĕлĕтпе.
Пăч-тĕттĕмре арканчĕ ĕмĕт,
пăтранчĕ кăмăл пĕтĕмпе.

Кунта юман пит йышлă шăтнă
Пӳлер çĕрпе танлашнă кун—
çĕре çити халь тайăлаççĕ,
ӳкекенни те пур, ав, кур.

Ту айĕнчен тапать çăлкуçĕ.
Юхать вăл кивĕ çулĕпех,

ҫич ĕмĕр каялла пĕтернĕ
пиншер пăлхар куҫҫулĕ пек.

Юхать Аталалла ҫăлкуҫĕ.
Ҫав ҫăлкуҫне куҫҫуль тумлать:
«Ҫаллех ҫитсе ĕлкĕреймерĕм»,—
тени хăрушшăн янăрать.

Ял ҫумĕнче — пăлхар масарĕ.
Унта эп чупнă ĕлĕкрех.
Пӳлер, Пӳлер, пĕтмерĕ халăх,
ӳссех пырать вăл ирĕкре.

Епле майпа юлма пултарчĕ?
Упрарĕ пулĕ сĕм вăрман?
Ҫакна аван пĕлетĕр хăвăр,
ан ыйтăрсамччĕ Саврăшран.

Мăнтарăн — халь те, йывăҫ-курăк
кĕҫ пуҫласассăн ешерме,
чул айĕнчен сиксе тăрать вăл
ҫилҫунатне йĕнерлеме.

Юлташĕсем сиксе тăраҫҫĕ.
Аҫта васкаҫҫĕ йĕкĕтсем?
Пӳлер ҫулне тупаҫҫĕ хăвăрт.
Васкаҫҫĕ Пӳлере вĕсем.

Ҫĕн паттăрсем ӳстерчĕ шанчăк.
Ҫарах ҫĕкленчĕҫ халăхсем.
Ан ӳкĕнсем, ан татăл, Саврăш,
пĕтмерĕҫ, сывă — чăвашсем.

Ҫуралчĕ те пĕр вырăс Улăп,
пин улăп тăчĕ ун ҫавра...
Ыттисемпе танах чăваш та
пурнать халь ирĕк ҫĕршывра!

## АТӐЛ ПАТТӐРӖ

Ман ҫӗрӗм-шывӑм — Саврӑш енӗ.
Эп хам та чӑваш мар, сӑвас.
Алтай та, Ҫӗпӗр те Кавказ
ман ут урипеле чӗтреннӗ.
Эп Атӑл паттӑрпа ҫӳренӗ.
Ҫав ят нихҫан та манӑҫмасть.

Нухрат, Чулман та Шурӑ Атӑл
васкаҫҫӗ Аслӑ Атӑла.
Васкать истори, ватӑлать.
Истори ҫеҫ-и, ҫӗр хӑй ватӑ.
Ҫыхӑнусен ҫиппи, ан татӑл.
Ыйтни те кӑлӑх. Татӑлать.

Тӑватпӑр Атӑлҫи патшалӑх
пӑлхар тӑвансемпе пӗрле,
телей ҫулне йӗрле-йӗрле.
Анчах сиксе тухать танмарлӑх.
Арасланать те пӑхӑнманлӑх
пӑлхавӑр вучӗпе кӗрлет.

Сӑвас-ха эпӗ, чӑваш мар-ха.
Сыв пул, Пӳлер, сыв пул, Сӑвар.
Савар-ха, Атӑлах савар.
Леш енӗ ун курнать юмаххӑн,
каҫса ӳкер те васкараххӑн,
унта ҫитсе юпа ҫапар.

Сыв пул, Элмуш, ҫӗршыв аванччӗ,
ытла начарччӗ тарҫусем —
мулла-ишан таврашӗсем —
власть ячӗпе пире аватчӗҫ,
вӗрен явнӑ пекех яватчӗҫ,
пӗртте тӑмастчӗҫ шеллесе.

Исламлама пире пулмарĕ.
Имçамлама — хысни яка.
Ҫаймарăмăр пит аякка.
Чингис урти килсе хупларĕ,
ура çине тăма памарĕ,
кăкларĕ, çулчĕ халăха.

Тинех чăваш эпир. Хĕсеççĕ.
Чăваш, анчах та мĕскĕн мар.
Ҫалаçтаратпăр Мускава.
Пăлхавăн çук виçи-хисепĕ.
Майра патшан, чăваш тесессĕн,
тути чĕтренĕ, мĕн тăван.

Ку хансенчен те хытă хирнĕ.
Чăваш сайралнă, хунайман,
ахлатнă, сÿннĕ, чăтайман.
Алхаснă выçлăх, йывăр килнĕ,
мур хырнă, халăх вĕçсĕр вилнĕ,
вăл пулнă мĕскĕн те айван.

Вăл суккăр, тĕттĕм, чухăн, выçă.
Хăй мĕлкинчен те вăл хăрать.
Пуç çийĕн вилĕм ахăрать.
Ыйтаççĕ куланай та хырçă.
«Хăтарччĕ, турă»,—
тет пуп хыççăн.
Асту, кĕтсех тăр, хăтарать.

Асран тухмасть пăлхавçă Вырăх,
асрах Якку Йăванĕ те:
«Пире çапах та вырăс,—тет,—
çăлса хăварĕ, аслă вырăс
кăтартĕ çул, кăтартĕ ырлăх,
пуç çĕклĕр, çăлăнăç çитет!»

Ах, Атăл паттăр, Атăл паттăр,
 açу сан ырă пулнă тет,
çапла халап çӳрет пирте,
эс тинĕс тĕпĕнче выртатăн,
эс йăхăма мăнаçлăх патăн,—
пуçа усмасăр çӳретен.

Яланлăха упранаймарĕ
мăнаçлăх—иртрĕç ĕмĕрсем.
Çук Атăл паттăр, паттăрсем,
ун пеккисем, çуралаймарĕç.
Çуралнисем пурăнаймарĕç —
йăлт тăчĕ самана хирсе.

Кĕç Атăл паттăрĕ çуралчĕ!
Кам çĕнтĕр Атăл паттăрне!
Ун вăйĕ витрĕ тĕнчене.
Вăл пулчĕ вырăс, вăл çунтарчĕ —
хĕн-пусмăр çĕршывран сухалчĕ,
çут ирĕк кĕчĕ чунсене!

## ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Йăлт тӳсрĕн—асилме те йывăр,—
ма хурлăха пит асилес,—
Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕ,
пурнатăн эсĕ, пурнăн эс.

Нихçанхинчен паян эс сывă,
нихçанхинчен куллу хавас,
Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕ,
юратнă халăхăм, чăваш.

Халь пурнăçу телей ăшши вăл.
Мĕн чухлĕ тус йĕри-тавра!

Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕ,
пĕртан эс Аслă Çĕршывра.

Савса, куллен çĕн юрă хывăп,
чысна сăпайлăн мухтаса.
Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕ,
яту сан сывлăм пек таса.

Ăна çĕклесчĕ те çĕклесчĕ,
туйса ĕçлесчĕ парăма,
Тăван çĕршыв, тăван кĕтесĕм,
ĕçӳ ан пултăр харама.

Санран инçе кам ырлăх шырĕ?
Вăл чунсăр çын, е чунĕ — чул.
Тăван çĕршыв, Чăваш çĕршывĕ,
эс мансăр пурнăн, эпĕ — çук...

## ЭПĔ ÇЫРАТĂП

Асталăр, шаккăр тимĕр,
чупкалăр кунĕпе.
Ан кансĕрлĕр, ан килĕр —
çыратăп кĕнеке.

Чертежсене пăхкалăр,
купалăр çурт чулран,
пĕр хăвăрах сухалăр —
çынсем çинчен çырап.

Çын çитмесессĕн, тăхтăр —
эп çитĕп хашкаса,
инкек пулсан, ан тăрăр
çăварăра карса.

Ĕçсем пĕтсессĕн, эсĕр
пит шавлăн иртекен.
Асапăма хисеплĕр —
çыратăп кĕнеке.

Ĕç пĕттĕр, вара килĕр
пĕрийĕ юлмиччен.
Шăв-шав лăпланмĕ пирĕн
ирччен...

## ПОЭТĂН ÇУТĂ СĂНАРĔ

Кам тухрĕ тĕрĕсе: элекçĕ
е Çеçпĕл — шĕл-кăвар поэт?
Кам ячĕпе сăмах илеççĕ?
Кам ячĕпе курса çӳреççĕ?
Кам вутлă тăвăл пек кĕрлет?
Кам тухрĕ тĕрĕсе? Пĕлесчĕ.
Тен, эсĕр, Çеçпĕл тӳрисем—
ним айăпсăр пулсах поэчĕ,
хыпса çăтасшăн çуннисем?
Кам — халăх чĕрине вырнаçрĕ?
Кам ячĕ юлчĕ ĕмĕре?
Ма Çеçпĕлшĕн йĕре-йĕре
тăванĕсем çӳç шуратаççĕ?
Мĕскершĕн-ши тавçăраймастпăр
çынна туймашкăн вăхăтра?
Мĕн-ма час-час малта тăрать
усаллăх? Мĕншĕн? Калаймастпăр.
Пĕлетпĕр: пурăнăç тиркенĕ
ăна çак çутă тĕнчере.
Мĕнле капла? Тен, чăн-чăн гений
куç хупрĕ — çирĕм иккĕре?
Хупасшăн марччĕ. Хуçăк кăмăл,

хăрушă чир те юрату
пурнас кунне пĕтерчĕç çăмăл...
Элек... Асап та ырату...
Çакна калам: епле урсан та
элекçĕпе суя тӳре,
поэтсене тытса усратпăр
чун патĕнче те чĕрере!

## ТУКАЙ

Тутар пур чухне эсĕ пур, эс сывах,
чăваш асĕнче те пурнан яланах.
Тукай! Çиçĕмле çиçсе иртрĕн, çунса,
чăна мухтаса, суяна ылханса.

Шăпу, хуйхăртса, чĕрене каскалать.
Юрру çулран-çул чаплăрах янăрать.
Чĕр мăшкăл тӳссе, ырă кун эс курман;
тусран ытларах пулнă санăн тăшман.

Қашни шăл хăйранă, кулса-йĕплесе.
Сана хĕрупраç юратман епресе.
Чи шанчăклă та сивĕнми чун савни
вăл Тĕрĕслĕх пулнă,—чăнни, чăн-чăнни.

Пĕçертнĕ сăмах тĕрлĕрен йăх-яха,
сип кӳнĕ куллен пусмăрти халăха.
Çав  тĕрĕслĕхпе халăх пухнă вăй-хал.
Çав тĕрĕслĕх пек эсĕ вилĕмсĕр халь.
Çав тĕрĕслĕх халь чи малта тĕнчере.
Эс,-унăн хуçи, ĕмĕрех чĕрере.

Сана пур тĕнче асăнать ырăпа:
чăваш та мухтать ытарми юрăпа,
ытти халăхсем те, мĕнпур çĕршывпех,
сана йышăнаççĕ, хăйсен ачи пек!

## ЕСЕНИН

Хальхи эпир вулан томӗсенче
пуҫланнӑ ҫеҫ Есенинӑн таланчӗ.
Апла та чунӗ ыратнин хӑвачӗ
ҫуталӗ ӗмӗрсен ӗмӗрӗнче.

Ун чунӗ ыратни юратнипе пӗр шайлӑ.
Ма ӳкӗнет, ма кулянать ҫапах?
Хӑй пурнӑҫне вӑл пурӑннӑ ҫул майӑн,
утса ӗмӗтсенчи таҫти ҫулпа.

Хӑшпӗрипе татулӑх тупаймасӑр
шавланӑ, ашкӑннӑ ӗҫмесӗрех,
авланнӑ, уйрӑлнӑ, ташланӑ харсӑр...

Аҫта кӑна ҫитсен те тӗнчере,
вӑл—питӗ чӑрсӑр, тытса чарма кансӗр,
анчах пиртен пин хут илемлӗрех.

## САН ВУТУ ПАТНЕ...

*Равиль Файзуллина*

Сан вуту патне эп пытӑм, хӗн килсен.
Эсӗ те, вуту та ҫав-ҫавах иккен.
Шутламан нихҫан та пырасса ҫапла
пӗр кӗтмен ҫӗртен, эй, тусӑм, ачалла,
сывлӑша, ҫутта йӑлт ҫухатса, пӗтсе,
«кам хӑтарӗ, ҫӑлӗ кам?» тесе.

Ыталарӑн эс, пинҫуллӑхри тӑван.
Хӑпрӗ, ҫӗтрӗ ҫичӗют-тӑшман—
хурлӑхлӑх...

Çуса эс ятăн сурана:
çивĕч ăсупа тăна çутатрăн ăслăн,
çепĕç чĕлхӳпе чуна йăпатрăн ăшшăн,
чĕртрĕн те çĕклерĕн эс ăна
çĕнĕрен çӳле, унччен вĕçен çĕре,
кăйкăр пек туйма каллех çут тĕнчере!

Сан вуту патне эп пытăм, хĕн килсен.
Кайрăм эпĕ унăн кăварне илсе.
Эс те пыр, кĕтетĕп,—
вутăм сарăлать, хĕрет.
...Çăлтăрăм çунать
чăн тӳпере.

## ÇĔР ЧУНĔ

Эп пурриех вăл—ырлăх. Куллен-кун ӳсни.
Çилпе çунатланса лĕп çумăрпа çуни
пĕве-сие. Çурхи хĕвел ачашшăн
пӳçран савать. Çĕрте—сĕткен.
Тавра—уяв ĕшни.
Манпа тавралăх ăшшăн калаçасшăн.

Кашни сасса илтсе, кашни тĕсе курса,
ӳсесшĕн хам та. Çĕр тăрать парса
вăйне-хална. Ӳсетĕп те ӳсетĕп.
Эп пур. Аван. Паха. Анчах сисетĕп:
эп халĕ сасăсăр. Шыратăп хам сасса.

Шăтиччен хӳтлевсĕрскер, шăтсан,
Çĕр типесрен, вăл пĕтесрен хăрасчĕ ман.
Кайран кăна—хам пĕтесрен хăрасчĕ.
Вил çын та илтмелле хаяррăн кăшкăрасчĕ
тĕнчешĕн сехĕрленнĕ пур чунран.

Эй, сасӑ, ирӗк, уҫӑ, аслӑ сасӑ,—
Ҫӗр чунӗ ахлатни эс пулмалла.
Эп Ҫуракк, Ҫӗр, Хӗвел, Этем пулсассӑн,
кӑшкӑрура ман сас ҫӗтсе кайсассӑн,
Ҫӗр, сан чӗрӳ ҫапла кӑшкӑрмалла.

**ФЕСТИВАЛЬ**

Ҫӗр чӑмӑрӗ—чечек пек,
ҫеҫки шӑп пиллӗк ун.
Империалист,—пӗлетпӗр,—
чӗтрет ҫак паллӑ кун.

Ҫӗр чӑмӑрӗ—илемлӗ
шӑп пилӗк континент.
Хӑрушӑ бомбӑсемлӗ
империалист чӗтрет.

Фестивале каяҫҫӗ
ҫӗршыв ҫамрӑкӗсем.
Ҫашнин мухтавлӑ ячӗ.
Ҫашни маттур, ӗҫчен.

Фестивальте ҫӳреҫҫӗ
чӑваш каччи, пики,
ун илемне кӳреҫҫӗ...
Нумай вӗсем пекки.

Хавассӑн та чеченнӗн
ҫиҫ, фестиваль, эс, ҫун!
Ҫӗр чӑмӑрӗ—чечек пек,
ҫеҫки шӑп пиллӗк ун.

Ҫеҫкесене илентӗр
телей—пыл хурчӗ пек...

Сыв пултăр Çĕр—илемлĕ
шăп пилĕк континент!

## ВИВА КУБА

Кубăран мул ĕмме тек май çук—
çĕнĕ вăхăт!
Çавăнпа хурахсем тăрăшаççĕ
пит сăххăн
пĕтерме Кĕрешӳ утравне.
Çук, пулаймĕ
çавăрма киввине!

Çичĕ ютшăн ялан
Куба—хупă.
Кубăна тапăнсан, вăр-хурах
тупĕ тупăк.
Парăнмасть паттăр чунлă,
гитарăллă Куба—
ĕç ăсти, юрăсти.

Ирĕк пурнăç та мир
тĕнчипех сывă пултăр!
Пĕччен мар, пĕччен мар янăрать:
«Вива Куба!»
Пурăнатъ, пурнĕ те революцилле Куба
ĕмĕрех
тĕнчере!

## ЧИЛИ ПОЭЧĔСЕНЕ

Чили сăвăçĕсем, компаньерос,
Ирĕке мухтакан поэтсем!

M 23860-ЧУВ

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА ...ского

Фашистсемшĕн хăруша пĕлтерĕш—
Ирĕке мухтани. Сассăра хуплас терĕç
çăвара çĕтĕк-çурăк чиксе.

Пуçăртан пырса çапрĕç васкавлăн,
аллăра пăрса çыхрĕç хыçа.
Çĕр çинчи пур поэт пĕртăван вăл:
сирĕн алă ялан—пирĕн алă,
сирĕн пуç—пирĕн пуç хуть хăçан.

Патшари чунсăрсем пăвăртарĕç
поэта çĕр çинче пĕрре мар.
Малалла, юлташсем!
Çĕкленер пурте харăс.
Пурнăç паттăрĕсем, компаньерос,
çĕкленер те, чĕтретĕр тăшман.

Юлашки самантчен кĕрешер-ха.
Печчĕр, çакчăр, чакмастпăр нихçан.
Ялава çĕклесе çӳлереххĕн
халăхпа тачăрах пĕрлешер-ха,
кар тăрар та—тĕп пултăр тăшман!

## АН ИККĔЛЕН

Тĕнче пĕтмест, эс ан иккĕленсем...
Пурĕпĕрех, тĕнче пĕтет тесен,
чун хусканать, сăр-сăрлатать сивлеккĕн.
Эпир, паллах, пăхатпăр шӳтлеме,
сивлетпĕр тĕлĕнтермĕш эteме,
пӳртре утса çӳренĕ май тӳлеккĕн.

Хăшпĕрисен тĕп ĕçĕ—сивлесси.
Қăткăсах мар çак ĕç, мĕн каласси.
Ансатлăха саваççĕ—ман хăраххăм.

Тĕнче чăнах пĕтессĕн тăнă чух
хусканнă чун шӳтпе лăпланас çук,
лăпланчĕ-тĕк, эп çын пулма пăрахрăм.

## УРАЛТА

Хитре Свердловск аллейисем.
Қаçхи çиле тус тунă çулçă.
Тĕл пултăм тĕрлĕ площадьсем,
пĕри ытла та асра юлчĕ.

Йăм-хĕрлĕ явлăк-çулăмпа
вăл сулчĕ те, унта эп утрăм,
васкарăм çирĕп кăмăлпа,
çитсессĕн пысăк факел куртăм.

Сӳнми çак вут... Ун çутинче
чул палăк çыруне вуларăм.
Тем чухлĕ ят унта çиçет
пуç хунă йышлă коммунарăн.

Çил-тăвăл мар ват Уралта,
хăватлă вăрçă кĕр-кĕрленĕ.
Тухатпăр, тенĕ, пусмăртан
хĕн-хурлă халăх... Қар çĕкленнĕ.

Чăваш ачи, Шупашкартан —
вилтăприне эп пуç таятăп,
ун канлĕх сыххинче тăран
Урал сывлăнине туятăп.

Нихçан сӳнми вут умĕнче
тăрса, хĕрӳн çапла каларăм:
«Атте сыврать Мускав панче—
миçемĕш çул... сывратъ çаплах вăл.

Юнпа, чунпа, ӳт-пӗвӗмпе
тăшмансене эп курaймастăп.
Çав курайманлăх, факел пек,
ăшра сӳнмест те, лăпланмасть те!»

## ТРАКТОРИСТКА

Çӗршыв çийӗн вӗçнӗ çăхан çарӗ,
Мускав енне талпăннă тăшман.
Куллен-кун хăрушă фронт хыпарӗ.
Чăтнă халăх, çӗннӗ, парăнман.

Парăнмастпăр!—Зоя касса татнă.
Парăнмастпăр!— тенӗ ыттисем.
Ялăмра, çакна илтсен, хăватлăн
вут-хӗм сапнă Лиза куçӗсем.

Фронталла каяс тесе аптратнă.
Çул çитмен. Мӗн фрончӗ... Ан калаç.
Харсăрскер вара хускатнă трактор,
пулнă тăнă колхозра сухаç.

Килнӗ йывăр; Лиза туйса илнӗ:
тăрăшулăх пур та, хал çукрах.
Пӗр ăна кăна-и йывăр килнӗ,—
сыв арçын йăлт пулнă вăрçăра.

Ак пӗр яшӗ юлнă патронсемсӗр,
чӗр юнпа хупланнă, пӗвенсе...
Лиза, çакă хыпара илсессӗн,
çулçă евӗр ӳкнӗ чӗтресе.

Чӗрине тытса хуллен ахлатнă:
канлӗ çывăр, вилӗмсӗр салтак,

трактористка пурнăçĕ саклат пек
пулĕ саншăн, çĕрĕмшĕн,—йăлтах.

Сывăрман вăл, ыйхине çĕтернĕ.
Шăл çыртса та хуйхă пытарса,
тракторне куллен вăл кĕрлеттернĕ,—
пуринчен те иртерех тăрса.

Халь те акă, çамрăк пулмасан та,
сăнĕ лăпкă, ĕмĕчĕ çап-çут.
Вут хыпсассăн çĕршыва сасартăк,
Лиза йĕнерлерĕ хурçă ут.

Асилсессĕн, чун хыт ыратать çав.
Канмалла та, шел, тет, трактора.
Савнине вăл халь те юратать-ха,
манаймасть пуç хунă паттăра.

Çамрăк паттăр юлнă патронсемсĕр,
чĕр юнпа хупланнă, пĕвенсе.
Лиза, çакă хыпара илсессĕн:
«Парăнмастпăр,—тенĕ,—ĕненсем...»

«Парăнмастпăр,—тенĕ,—çĕнтеретпĕр,
пурпĕрех тĕп пулĕ выç тăшман.
Çуралман чура пулмашкăн эпĕр,
пуç усма та эпĕр çуралман!»

## ÇАРРАН АЧАЛĂХ

Ката хĕрри. Пĕр ушкăн йăрăс хурăн
çарран ачалăха асилтерсе
çавтер илемлĕ çĕнĕ юрă хунă.
Халь эртелпе юрлаççĕ килтерсе.

Çерем çине ура явса ларатăп.
Уç çил вĕрет пуç çийĕн. Вĕртĕрех.
Тек ĕнтĕ ача мар эп. Ача мар та,
пач çитĕннĕ теме те иртерех.

Инçе курнать кунтан.
Лере—кăваклăх.
Кăваклăхра, чуна ыраттарса,
сисетĕп эп, сисеп, çӳрет ачалăх,
алне сулать, каять, таçта каять тарса.

Эп хам та кĕвĕлерĕм çĕнĕ юрă...
Пĕр çамрăк хурăнĕ ма хăпнă ушкăнран?
Эс мĕн çинчен шутлатăн, йăрăс хурăн,
мĕскершĕн кулянса çулçусемпе шавлан?

## ЮЛТАШ ЙĂМАКĔ

И Шур Атăл, Шур Атăл,
Шурă Атăл кăпăкĕ.
Шурă Атăл кăпăкĕ пек—
ман юлташăн йăмăкĕ.

Чĕкеç евĕр чĕвĕл-чĕвĕл
тĕл пулсассăн калаçать.
Килĕшӳллĕ ӳчĕ-пĕвĕ,
куçĕ йăл-йăл вылянать.

Пултарать вăл ĕçлеме те,
савăнма та пултарать,
вăрттăн ман çине пăхать те,
чуна вут пек çунтарать.

## ЛАНТĂШ

Сĕм вăрманта шур кĕмĕл лантăш
эп татрăм ахаль мар иккен—
сана валли, юратнă тантăш,
сана валли, маттур пике.

Сип-сивĕ сывлăм йăлтăр-йăлтăр
йăлтăртатать чечек çинче.
Ах, ан силле, упрантăр, юлтăр—
хĕвел тин çеç тухать. Инçе...

Вылятăр чĕрĕлĕх, тасалăх
хĕвел шевлиллĕ сăнунта.
Эп, тусăм, ĕмĕр асăнмалăх
хăварăп çакă саманта.

## ИРХИ ЮРĂ

Тухăç ылтăн сапăннă
вут пек ялкăшать.
Эс халех Светланăна,
амăш, ан вăрат.

Туслăх пирĕн пĕлĕтсĕр,
çук кӳрентерӳ.
Мĕн курать, эп пĕлĕттĕм,
тĕлĕкре хĕрӳ?

Çывăртăр, ан илттĕр вăл
пуйăс чĕннине.
Сĕнк пулса çеç илтĕм эп,
тухрăм çул çине.

Эп инҫе пуҫтарӑннӑ,
кулянса тӑрап...
Эс халех Светланӑна,
амӑш, ан вӑрат.

## ПӐХМА КӐНА...

Шутлан пуль кулянать тесе.
Ҫук, ҫук, кӑшт ҫеҫ... иртет...
Эп хам пӗлместӗп, мӗн шырап;
мӗне-ши чун кӗтет?

Хӑш чух, тен, кулянать чие
тӑкса шап-шур ҫеҫке?
Вӑл та пулин пире кӑна
салхуллӑ пек иккен...

## КУҪСЕМ

Ун чух ҫапса ҫӑватчӗ ҫумӑр...
Агитбригада хашкаса
вӑрман пӳртне кӗрсе пытанчӗ,
ҫилсем йӗреҫҫӗ уласа.
Ӑҫта эп? Мӗн ҫине тинкернӗ?
Ӑҫта ҫӳретӗр, шухӑшсем?
Ак, пӳлӗхҫӗм, мӗскер куратӑп:
тӑп-тӑрӑ, тап-таса куҫсем...
Паянхи кун та манаймастӑп
ҫав аслатиллӗ ҫумӑра,
ялан сире, куҫсем, туятӑп,
илтетӗп ҫутӑ сассӑра.
Эсир ун чух кӑшт хӳтлӗх ыйтрӑр

алхаснă тăвăл аллинче.
Телей пулса кĕрлерĕр хыттăн
çап-çамрăк сăвăç чĕринче.
Эсир ун чух кăшт ыйтрăр хӳтлĕх
хура вăрман уçланкинче.
Чăнах-ши, ним асăрхаймарăр
вут хыпнă сăвăç сăнĕнче?

## КĔМĔЛ СЕРЕНАДА

Эп шик! шăхăратăп
çут кĕмĕл саспа.
Çухамăм шуралчĕ
сип-сивĕ паспа.

Пĕлетĕн-ши эсĕ
кам шăхăрнине?
Сисетĕн-ши, тусăм,
тусу кĕтнине?

Унтах эп, çав вăрттăн
юман патĕнчех.
Тавра—лăпкă, тăнăç,
çут кĕмĕл тĕнче.

Çут кĕмĕл саспа эп
йыхрав шăхăрап...
Шăнмашкăн шăнман та,
санпа—ăшăрах.

## ÇУРХИ ФАНТАЗИ

Ман умран вĕçсе иртеççĕ
шурă-шурă акăшсем,
питĕме тивсе лăпкаççĕ
çунатпа варкăшнисем.

Аллăма тăсатăп эпĕ:
парăрсам пĕр тĕкĕре.
Тăкăнать тĕнче илемĕ—
сарă уйăх—тӳперен.

Акăшсем вĕçсе иртеççĕ,
пăрахмаççĕ шур тĕкне.
Кăмăлăм çаплах туймасть-ха
акăшпа юр пĕрехне.

Эс каларăн: «Çилĕ ăшă,
çӳçенетĕп эп çапах».
Эпĕ хирĕç йăл кулатăп,
йăпшăнатăп çумнарах.

## САВНИ

Лашам—шыв леш енче,
хам—ку енче.
Каçăттăмччĕ—ура йĕпенет.
Каçăттăмччĕ—ура йĕпенет,
каçмасассăн—лаша кĕçенет.
Савни—вăрман урлă,
хам—ял урлă.
Кайăттăмччĕ—лашам ĕшенет.
Кайăттăмччĕ—лашам ĕшенет,
каймасассăн—савни сивĕнет.

Шуră кĕпе лайăх—ут çулма,
çинçе пӳ-си лайăх—сулăнма.
Шухăшлап та çакă пуçăмпа,
тăван çĕртех аван пурăнма.

Урамĕсем вăрăм—утмашкăн.
Алăкĕсем сăрлă—уçмашкăн.
Кулли тусăн çутă, сăнĕ хитре,
вăтанап кусĕнчен пăхмашкăн.

Сивĕ, шăнап, куçса çума лар,
ĕмĕр уйрăлмасса ална пар.
Уйрăлмăпăр, тусăм, сивĕнмĕпĕр,
ĕмĕрлĕхе пĕрле пурнăпăр.

## АВГУСТРА ТА...

Август маншăн та çур мар, эп пурпĕр:
«Ырă вăл,—теесшĕн,—çур пекех».
Августра та юрăсем янраççĕ,
хăш чухне янраççĕ çĕрĕпех.

Августра та пурăнатпăр эпĕр
пĕр-пĕрне шанса та ĕненсе,
эрнипех хăш чух тĕл пулаймастпăр:
е пĕри, е тепĕри инçе.

Элеватор, çул, йĕтем... Çук вăхăт.
Пурпĕрех кас тунсăх çуратать...
Пурпĕрех çак ĕçлĕ августа та
çур пекех саватăп, юратап.

## ЧУН САВНИ

Ах, вӑрман, хура вӑрман,
пуш аврийӗм, пуш аври!
Ҫалӑр, кам улах ларман?
Ҫамӑн ҫукка чун варли?

Ах, вӑрман, хура вӑрман,
савнӑ тусӑм асӑмрах.
Куртӑм тӗлӗк, мӗн тӑван,
куртӑм ҫывӑрмасӑрах.

Ах, вӑрман, хура вӑрман,
тусӑм кайрӗ хирӗҫсе.
Эп ҫӗр каҫрӑм—шӑпӑрлан—
уткаласа ҫӳресе.

Эх, вӑрман, хура вӑрман.
Ҫул ҫухатрӑм, ут утмасть.
Тусӑм тухрӗ асӑмран—
сивӗнтӗм, тек чун туртмасть.

Эх, вӑрман, хура вӑрман.
Сарӑ хӗрччӗ чун савни.
Ут-ха, утҫӑм, ҫӗрҫӑтман,
хуҫӑлчӗ ман пуш аври...

* * *

Сӑрлӑ ҫуна сирӗн тӗлӗрте.
Сар пӗкки ҫинче кӑвак хӑю.
Килме хушрӑн. Килтӗм. Ҫаяс теп.
Ҫурмасӑр юлатӑн, курса юл.

Сăрлă çуна сирĕн тĕлĕрте.
Темшĕн калаçмарăн манпала.
Çакă пулчĕ пулĕ тĕлĕкре.
Ухмах кайрĕ тесе ан кала.

Сăрлă çуна сирĕн тĕлĕрте.
Ĕмĕр пирĕн пĕрре, иккĕ мар.
Савасси те пулĕ ĕмĕрте,
писесси те... Сывă пул. Ҫаçар.

## ЧУНĂМРА

Ман санпа ăнăçмасть калаçу.
Эс манран ютшăнан хĕлĕпех.
Çĕрĕпех ыйхă çук, ыйхă çук
шухăшсем çĕнтерсе илнипе.

Тыткăнра эп, анчах аманман;
чунăмра—чăн тивлет, чăн илем.
Çавăнпа тăрăшмастăп тарма—
тыткăнрах пурăнассăм килет.

Ҫантăкри туп-тулли уйăх—эс.
Йăлтăратăн, анчах ăшшу çук.
Пĕçертмест йăл куллу, çут куçу;
ютшăнатăн манран хĕлĕпех.

Хĕвел пек ялкăшма мĕн хушмасть?
Мĕншĕн вут-кăвару тĕлĕрет?
Тапратсамччĕ пĕрре ялкăшма,
хăтарсамччĕ çурма тĕттĕмрен.

Сивĕ, сивĕ—шур уйăх çути;
сивĕ, сивĕ—урам, çут тĕнче.

Палăрать уй енче çил чуппи,
курăнать вĕçсĕр-хĕрсĕр инçет.

Вăхăтлăха кĕрсе тухасшăн
кам çĕмĕрнĕ-ха çăрана?
Кам пĕр çĕклемлĕх ут çуласшăн
таптанă ешĕл çарана?

Çăри юсанĕ, пўрт шăпланĕ,
çаран тўрленĕ хăй майпе,
анчах та санăн чун суранĕ
хăçан сипленĕ çавăн пек?

Çын илĕм-тилĕм çамрăк чух
епле сасартăк сипленсен те,
илтсе çĕр тĕрлĕ калаçу,
кайран татах сăмах тўсен-тĕр.

Пĕр ăстрăм киленўшĕн татнă
çеçке çеç çурнă шур чечек,
мĕн савнăçпа çаплах çиçетĕн
хаваслă, ырă та чечен?

## ПУЛЬНИЦАРА

Кантăкра—ирхи çутă.
Кантăкра—лăпкă юр.
Ма чунра çутă çук-ши?
Ма ялан хурлăх пур?

Ахаль кун-и, уяв-и,
чўрече çеç умра.
Хăш чухне çеç туятăп
хама хам урамра.

Ҫантӑкра—ирхи ҫутӑ.
Ҫантӑкра—лӑпкӑ юр.
Эп кӗтеп... Килес ҫук эс...
Эп ҫаплах саншӑн ют.

Эс мӑн кӑмӑллӑ... Пурпӗр—
куллен-кун тӑванрах.
Илсе кил, тусӑм, пурнӑҫ,
илсе кил хӑвӑртрах.

## ВӐРӐМ ҪУЛ

Сан патна ҫул вӑрӑм—ҫитеймерӗм,
ҫӗр чӑрмав тӗл пулчӗ ҫул ҫинче.
Пӗрре мар, нумай эп иртеймерӗм
пӑрӑнса суя этемсенчен.

Сан пирки вӗсем мана ятлаҫҫӗ.
Имӗш, эс тӑрлавсӑр хӗрача.
Туссемех пӑшӑрханса калаҫҫӗ:
«Нимӗн чул пӗлмест вӑл пурнӑҫа».

Вӗҫсӗр иккӗленнӗ самантра та,
ӑс епле вылянӑ вӑхӑтра,
ыр ятна куҫ шӑрҫи пек упратӑп,
чарӑнмасӑр ялкӑшса вутра.

Сӳнес теттӗм эпӗ, сӳнеймерӗм.
Манас теттӗм, пӑлхану иртмен.
Сан патна ҫывхартӑм. Ҫитеймерӗм.
Тен, ҫитеттӗм те-и, эс кӗтмен.

## ЭП КЁТРЁМ

Эп кётрём сана кунёпе,
эп кётрём сана çёрёпе,
эп кётрём эрни-эрнипе.
Эп кётрём... çулталăкёпе.

Эп кётрём сана яланах.
Эс çукчё—ман çётрё юмах.
Эс килтён—эп кётрём çапах,
палла пёлеймесёр, санах.

Пёр кун-ик кун мар, пёр çул мар
эс йăпшăнтăн манăн çума.
Эс пултăн манпа юнашар—
кушак пулнă пек юлташа.

Эп кётрём сана виçё çул,
тата кётмелле-ши мён чул?
Эп кётрём сана çичё çул,
çунса кăмрăкланчё ман чун.

Эп ямăп сана хўтерсе
е илмёп тултан питёрсе.
Эс çук... Ёмёрне хёмленсе
эп кётёп сана тилмёрсе.

*

Эп сана вăрçмастăп, кўренместёп.
Ман пулман та, çук та тарăху.
Поэта нумай çунтартăн эсё;
вут витмен-ши, эс çунмарăн ху.

Эсĕ çутнă çутă-çутă кулă
поэта вăй-хал, телей парса
миçе çул савăнтармарĕ пулĕ!
Халĕ те вăл сиплĕ те таса.

Яланах манпа эс ырă-ырă,
хăв вара урăххине саван.
Тĕлĕкре çеç сан патна халь пырăп
вуламашкăн юлашки сăвва.

Эп сана юратнă—ӳкĕнетĕп.
Сивĕнтĕм—шеллетĕп, кулянап.
Хăвна мар манмастăп, ĕненетĕп,—
куллуна, хĕвеллĕ куллуна!

## ÇУЛ ÇИНЧЕН

Кĕрхи хум-хумлă тӳпере
хĕвел кулать вĕт çумăр витĕр.
Чуста пек пылчăка, пĕрех,
çăрса утап, хам ырнă питĕ.

Çич çухрăм юлчĕ хыçала.
Чипер юл, станци «Шуçчуманĕ».
Çитсе пыратăп ялалла.
Ума кĕç тухрĕ çил арманĕ.

Тем чухлĕн шурă хурĕсем
ял вĕçĕнчи кӳлле иленнĕ.
Чуспа пĕркеннĕ çĕн пӳртсем
шуса тухаççĕ пит илемлĕн.

Килте—мунча пăс кăларать,
хăна чĕнме сĕтел те витнĕ,

тăван килйыш кĕтсе тăрать,
анне кулать куççулĕ витĕр.

## УЙĂХ

Тăратăп сывлама та хăраса
çӳл тӳпене çут уйăх хăпарсан.
Хавaслă эп, хаваслă
ĕмĕрне манмаслăх,—
тăрап куçа чарса,
çут тĕнчене манса.
Ухх... мĕн тери мăнаçлăх,
мĕн тери мăнаçлăх,
мĕн чухлĕ вăрттăнлăх çӳрет унта!
Мĕн чул хăват унта пырса вырнаçнă!
Сăпай мăнаçлăх,
вилĕмсĕр мăнаçлăх,
эп хам та вилĕмсĕр сан умăнта,
эп—иксĕлми, эп çӳллĕ те инçе
çурхи тивлетлĕ уйăх çутинче!

## ÇЕÇЕНХИРТЕ

Ав кӳлĕ те вăрман.
Мĕн çук-ши вĕсенче!
Çеçенхире тухсан,
куçа çиет чечек.

Йăм-хĕрлĕ те кăвак...
Мĕнле кăна тĕс çук!
Эй, хирĕм, хир, тавах,
епле кунта çап-çут!

Кăшт тунсăх кăмăлра
янрать пĕчченнипе.
Эп çакă «тăманра»
пыратăп çĕтнĕ пек.

Ирĕклĕхре çӳреп,
хире парса чуна.
Эп çук пекех иртеп,
инçетлĕхе чăмап...

## ЫРАШ ПУССИ

Хум хăвалать ыраш пусси.
Вĕçĕ-хĕррисĕр симĕс тинĕс
тăрасшăн мар ирпе те тикĕс.
Тăпах тăрсан мĕскер пур-ши?

Ыраш ларасшăн шăркана.
Тен, çавăнпа вăл пăлханать-тĕр.
Хумсем куçа та, хăлхана та
хупласçĕ тунсăхпа кăна.

Инçет йăсăрланать кăваккăн.
Кĕреп сукмак çине кĕçех.
Сукмакĕ ансăр, кукăр-макăр,
кашни кукрийĕ—шур чечек.

Пĕр ывăç туллиех татам-и,
çумне хушам утмăлтурат.
Паллана хĕрача пур—Таня,
çитсессĕнех чечек парап.

## ÇЫРУ

Юратнах, савман мар ĕнтĕ эс те.
Пĕр пулмарĕ çапах пирĕн çул.
Кўренместĕп сана, кўренместĕп.
Кăмăла пасарта илме çук.

Пĕрмаях хулана йыхăраттăн:
«Хулара—чăн культура, аван».
Эп пымарăм. Аван ялăмра та
пăр пек сив пулмасан чун-хавал.

Çĕнтерў ĕçре турĕ бригада,—
канăç тупнă пек пулчĕ чĕрем.
Туссемпе пĕрлешсе юрра ятăм.
Самантран канăç çĕтрĕ çĕнрен.

Канăçа çухатсан, чун хĕмленчĕ:
ырă ĕç кĕввине мĕн çитет!
Çакăнта вăл этемĕн тивлечĕ,
çакăнта чăн телей, çак тĕлте.

Çĕршыва ăнланма йывăр мар-мĕн:
çамрăксем халь ялта кирлĕрех.
Эс çукран Саврăшпуçĕн урамĕ
мансăрах вăй вылять тĕрлĕрен.

Кўренет (эпĕ çеç кўренместĕп)
çĕн клубри радиола, баян.
Эп сисетĕп: çунатăн вĕт эс те!
Килсе çит, хуть ыран, хуть паян...

## КĔТНИ

Кĕр кунĕ мар чĕкеçсĕр юлчĕ.
Ку илтрĕм эп: «Каçар, сыв пул».

Океан мар, ман чун пăлханчĕ,
ман чун, ыйха татса тем чул.

Санра ман савăнăç та, терт те
ачалăхри самантсенчен.
Чылай юлташ курса ирттертĕм,
сан пеккине курман хальччен.

Сĕм пĕлĕт явăнса юхать-и,
хуплать-и каç хитрен, хуран,
ума эс тĕрлĕрен тухатăн:
е çăлтăр эс, е çӳç туран.

Сан куçусен хĕмне çĕнеймĕ
çăлшыв е чĕркĕмĕл çути.
Сан уттуна нимле çитеймĕ
чи чаплă пикесен утти.

Ĕç хыççăн çырмана ансассăн
пите çума, Малтивĕçе,
ката енчен килет пĕр сасă —
таса, тĕлĕнмелле çемçе.

Сан сассупа танлаштараймăп,
сан чухлĕ вăл пултарас çук.
Йăпаннă, çуннă эп, пуç тайнă
сан юррусем шăраннă чух.

Тата асра çап-çуттăн юлнă
шкула пĕрле çӳренисем,
сан умăнта епле хăюллă
курăнайма тăрăшнисем.

Хам пурпĕрех ни вил, ни чĕрĕ
пулаттăм çепĕç вальссенче!
Аксун вунçичĕ çулхи хĕрĕ,
çавна пĕртте сисместĕнччĕ!

Ҫӗр кунӗ мар чӗкеҫсӗр юлчӗ...
Мӗн-ма «каҫар»?
Мӗн-ма «сыв пул»?
Океан мар, ман чун пӑлханчӗ,
ман чун, кӗтсе сана тем чул.

Халь те ҫавах, чи сывӑхскерӗм,
сана кӗтетӗп тилмӗрсе,
пур йывӑҫ-курӑк кӗтнӗ евӗр
хӗвел тухса ҫӗклennесе...

Ҫаллех пӗрле пуласчӗ пирӗн.
Ман сансӑр пурнӑҫ — пурнӑҫ мар.
Эс манӑн ҫутҫанталӑк ирӗ.
Вӑй-халӑм эс.
Телей эс ман...

## КАҪХИНЕ

Вӑштӑр вӗрчӗ ҫурхи ҫил
уйӑх тухнӑ чух.
Вӑштӑр вӗрчӗ те лӑпланчӗ,
таҫта кайрӗ — ҫук...

Улӑхра хӗрсем тӑсаҫҫӗ
ик хитре саспа
ҫуркунне ҫинчен ыр юрӑ
тулли кӑмӑлпа.

Йывӑҫсем тӑраҫҫӗ шӑппӑн —
чӗмсӗр мӗлкесем.
Сывлӑм шӑрҫисем йӑлтраҫҫӗ —
ахах пӗрчисем.

Çĕмĕртсем çеçкине çурнă,
çĕмĕртсем — лаштра.
Вĕсене те курчĕ уйăх,
курчĕ аякран.

## МЕДСЕСТРА

Эп сывăрман. Çывраm пекки тăватăп.
Йăвашшăн хăй çунать пуç вĕçĕнче.
Палатăра эпир пурĕ тăваттăн.
Анчах та çĕр чĕртетĕп эп пĕччен.

«Килет-и, çук-и хальхинче? Килсенччĕ.
Сестра, шур акăш, пирĕшти, килсем...
Вуниккĕ ма çапмасть халь те сехечĕ?
Ма халь те лăпланмаççĕ чирлисем?

Килсен паян, паллах, эп йынăшмастăп,
ĕнерхи пек, утияла сире-сире.
Паян çыврас пулать...
паян сывлатăп ассăн,
ăна ятран чĕнсе тĕлĕкĕмре.

Вăл пĕчĕк ывăç тупанне хурсассăн
вут пек пĕçерекен çамка çине,
тата тепре хаштах сывлатăп ассăн.
Вара... вара эп сывă ирчченех...»

## ТУНСĂХ ПУР

Пулăпиннчĕ эпĕ çутă уйăх
тĕксĕмленнĕ çӳллĕ тӳпере,

куrăттăнччĕ, курмасассăн—туйăн:
тунсăх пур хаваслă сăн-питре.

Пулăпинччĕ эпĕ çутă çăлтăр,
çӳрĕттĕм таттисĕр йăр та яр.
Çăлтăртан канăçсăрри ним çук-тăр,
канăçсăр, анчах тăрлавсăр мар.

Пулăпинччĕ эпĕ çепĕç шăпчăк
суркуннешĕн хытă савăнма.
Шăпчăкчен чуну сан кĕрхи шăнччĕ,
халĕ путрĕ вутлă çулăма.

## ЮРАМАННИ

Тĕлĕнмелле! Çав пысăк панулми,
пиçмен пулсан та, темшĕн илĕртет.
Татма юрамасан та, эпĕ, шет,
чиксе каятăпах каçа валли.

Епле çĕнес хама, епле йӳнеçтерес?
Юраманни мĕн-ма текех асамлă?
Эс, панулми... ма ăрăмлатăн эс?
Мĕн-ма санран хăпма çавтер асаплă?

Пĕчĕкрех чух, манман-ха, тăм лаша
çапла тухатнăччĕ: ватса пăхас килни
тĕпрен пăлхатнăччĕ пӳлсе пур сывлăша.
Юраманнин—ялан хитре кĕвви.

Çав кĕвĕпе ташларăм пĕрре мар.
Пĕрмай чĕнет, пĕрмай таçта чĕнет вăл.
Хăратăп эп — каллех, каллех çĕнет вăл.
Вăй пар, эй, ирĕкĕм, ан чак, вăй пар...

## ТАСАЛĂХ

Мана çĕклет эс панă çутă.
Сан çутупа илемленсе
вăйлантăм эп. Çак ăнăçуллă
самантăма хисеплесе,
хама вĕрентĕм ăнланма,
хама вĕрентĕм хаклама,
хавалла пултарулăх тупрăм.
Анчах çав манăн вăй, эп туйрăм,
эп хама хам тасатмасан,
хам ялтрама пуçлаймасан,
вăл канăç параймасть чуна.
Сăн кӳчĕ сан çуту мана,
анчах пĕччеҥлетсе хăварчĕ:
ăçта вăл вăйлисен хăвачĕ —
вĕсем ялан хăйсем кăна.
Апла эп вăйлă-и? Ҫала.

Эп тивĕç-и çапла ыйтмашкăн?
Чун хирĕçлет, чун ыратать.
Мĕскер-ха сан патна туртать?
Ман тивĕç пур-и туртăнмашкăн?
Эп хамра çук тасалăха
туясчĕ, ăнланасчĕ тетĕп.
Ма чун сурать та юнăхать—
ăна пĕр хам анчах пĕлетĕп.
Мĕн саншăн — чунăм ыратни,—
аҫаль çунатăп, хапсăнатăп.
Çак чыспала эп юратни
сана чыс кӳреймест, чăнах та.
Ҫуллен-кунхи тасалăхра
ӳсме те, çĕкленме те сансăр,
çутусăр, илемӳсĕр,— кансĕр.
Эс — хăвăнтан хăватлăрах.
Чуна майпен эп лăплантарăп,

ăна чĕр пиçĕлĕх парса.
Хама эп çĕклеме пултарăп,
ятна хĕвеллĕн кăтартса.
Çапла майпа эп ӳсĕп, ӳсĕп
çĕнме тапраннă çĕн вăйпа.
Кĕлленĕ чун. Эп чăтăп, тӳсĕп,
татах çĕкленĕп — çав майпа!

## ЧЕЧЕК ÇЫХХИ

Кайрăм вăрмана,
кĕтĕм ĕшнене,
тухайăп-ши, çук-ши
Тĕпсĕр Çăл енне?

Шурă чечексем
куç чарса пăхаççĕ,
лĕчĕк ача пек
имене тăраççĕ.

Сарă чечексем,
сарă аппа пек,
ялкăшса çиçеççĕ
ылтăн хĕмĕпе.

Хĕрлĕ тĕс кăвакшăн
пĕртăван пуль тетĕп,
çыхă тунă чух
пĕр çĕре тиретĕп.

Татмалла та марччĕ —
шел чечексене...
Тухрăм тин хам пĕлнĕ
Тĕпсĕр Çăл енне.

## САВРĂШПУÇ

Куçне чарса пăхать çут уйăх ял çине.
Çурт мĕлкисем итлеççĕ шăплăха.
Урам пушаннă. Вăйă сассисем
янрамаççĕ.

Сĕм ращара шăпчăк юрлать,
çĕр çывратмасть çап-çамрăк ачана.

Уйăх каçсерен — курса тăранайми.
Пÿрт тăррисем — кип-сивĕ кĕленче.
Аçта каяс? Манса çут тĕнчене
ял çывăрать.

Сĕм ращара шăпчăк юрлать,
канăç памасть çап-çамрăк ачана.

Урам кĕтессинчи виç сÿннĕ чÿрече
вăраххăн тĕлĕрет умра.
Эпĕ мар кăна, гитара калаçать.
Гитара...

Сĕм ращара шăпчăк юрлать...

## ХАВАСЛĂ ХĔРАЧА

Эс хаваслă, эс хаваслă,
эс хаваслă хĕрача.
Эс, хаваслă хĕрача,
килнĕ «каччă шыраса».

Çавă сăмаха кăларнă
эс тиркенĕ яш этем.

Çунтарать куçне кăваррăн...
Эс çаплах хавас çӳрен.

Ним туймастăн эс. Туймастăн
атьсем сиввĕн пăхнине,
хăвăнпа сăмахламасăр
айккине пăрăннине.

Эс çӳретĕн, эс итлетĕн
манăн купăс кĕввине.
Те илтетĕн, те илтместĕн
вăл сана мĕн тенине.

## МУЗЫКА

Крещендо* ӳкрĕ те... çухалмарĕ.
Аслати хыççăнхи çумăр пек,
юрлать те ташлать çырăн-варăн,
юрлать те ташлать хăлхара çĕрĕпе.

Крещендо... Пуçа çурасла
мана хуйхă çапнăччĕ те,
ахлатрăм ӳксе хăрушла —
ах! илтĕнчĕ сас инçете.

Вара шăппăн çеç йĕтĕм эп.
Крещендо... Вара сехет çурă,
аслати хыççăнхи çумăр пек,
шăппăн çурĕ куççуль, шăппăн çурĕ.

---

* Сасă хăвачĕ ӳссе вăйланнине пĕлтерекен музыка терминĕ.

## ÇУМĂР ÇĂВАТЬ

Чăштăр-чăштăр çумăр çăвать,
çумăр çăвать тупата!
Улми ташлать, çулçи çупать—
сада тухас-ха, сада.

Чăштăр çумăр, сиплĕ çумăр,
çумăрсăр епле ÿсен?
Килĕр пурте. Çунă-çунă—
сутăрах пĕр сехетсем.

Садри сукмак—чăпăр-чăпăр!
Ма хăрас çак ăшăра,
тухăр та хăюллăн чупăр,
тухăр, тухăр çаруран.

Çумăр çурĕ, çурĕ, çурĕ.
Тав туса пуç тай ăна.
Кĕр-кĕрлет васан шыв-шурĕ,
çуркунне пек туйăнать.

## ХĔЛХЕМ

Анан хĕвелĕн юлашки хĕлхемĕ
кăшт тĕлкĕшрĕ те шăппăн сÿнчĕ.
Çу кунĕ иртрĕ... Тăнăç...
Тĕттĕм пулчĕ.
Ман чунăм ыйхăлать, хавасăм сулчă.

Хĕлхемĕм, юратса хĕрхентĕм
сана эп, ах, мăнтарăн, терĕм.
Пите ачашласа, çемçе минтерĕм
шеллев сăмахсене темччен итлерĕ.

Черченкĕ чунăн çулăмлă чечекĕ!—
çырма çаранĕнче кăвайт ташла пуçларĕ.
Тен, леш хĕлхем çĕнрен çапла çиçет-и?
Қаятăп, тăвансем, çывăрасси пулмарĕ.

Анан хĕвелĕн юлашки хĕлхемĕ,
эс катăлса унта ӳксе юлайнă.
Аван, юлташăм, тавтапуç... пит лайăх.
Эс ыйхăллă чуна, хавасăма хĕрхеннĕ.

## ЫЛТĂН ХĂЙĂР

Шап-шурă хĕрнĕ тимĕр пек вăл пĕçерет.
Қуç ыратать ун çутипе, ай, хăйăр!
Çыран хĕрне пымасăр хум çӳрет.
Çилхи хăйăр пекех шап-шурă хăйĕн.

Вăл чĕннипе эп ун патне кĕретĕп.
Çĕклет те ачашлать мана çав ăшă хум.
Қунта йăлт манăçать: хаваслăх, тарăху.
Қунта эс ыйхăлан,
сар кун çĕршывĕнче çӳретĕн.

Тухмасăр сарă кун çĕршывĕнчен
эс хăйăр ытамне тухса выртатăн—
халь хăйăр вĕри мар. Чун каниччен
ыр тĕлĕкре урхамахсем тытатăн...

Анчах—тарса пĕтеççĕ шух урхамахсем.
Хумсем те тарнă. Хăйăр сулăмланнă.
Хĕвел, кулса, чăн тӳпене хăпарнă,—
йĕп пек тиреççĕ çут пайăркисем,

## ХУМСЕМ

Çилçунатăм-урхамахăм—
шур çилхеллĕ чăрсăр хум,
чĕввĕн тăр, ташла та ахăр,
ан юртсам çавтер салху.

Çитейместĕн—ан хăв эсĕ
умăнти хушка хума.
Савнăç пур-и сар хĕвелсĕр?
Шанчăк пур-и савăнма?

Савнăç пур-и вăйлă çилсĕр?
Савнăç ирĕкре кăна.
Çил юрлать. Хаваслă чиксĕр—
хум васкать чул çырана.

Çил—кĕрле, çанталăк—макăр.
Хум, хума ан чар, çул пар,
чĕввĕн тăр, ташла та ахăр,
çапăнса салан чăл-пар!

## АВĂР

Тĕттĕм авăр тĕпĕнче
çăткăн çăрттансем çӳреççĕ.
Çӳллĕ çирĕк умĕнче
çӳçесем çӳçне чӳхеççĕ.

Çирĕк, çĕмĕрт, хурама
авăра йăлт хупăрланă.
Хурăн темшĕн хурланать,—
пĕр-пĕччен сăрта хăпарнă.

Ватă лапсăркка çăка
пĕлĕте çити кармашнă.
Ун пекки кунта çуках—
кăнтăрлах çултан аташнă.

Шăллăма калап: «Итле,
авăрта тем чул тухатмăш,
ун патне ан кай çĕрле—
вутăш ачисем тухаççĕ».

## ХĔВЕЛ АННĂ ЧУХ

Хĕвел «куян çине утланнă»,
çĕр хыçнелле кайса пырать.
Горизонтра тӳпе вутланнă,
пушар алхаснă пек курнать.

Хирте хăлаçланать комбайн.
Вырать, вырать хастар Ванюк.
Анăçалла пăхса куç айĕн
шутлать вăл: «Пĕлĕт тавраш çук.
Мĕн-ма çав каç тени килет-ши
сывлăмĕпе чăрмав кӳме...»

Каять хĕвел, анчах пĕлет-ши
Ванюкăн шухăш-кăмăлне?

## ПĔЧЧЕН ЙĂМРА

Ах, йăмра... шыв çине
эс пăхан кунĕн-çĕрĕн.

Кам ӳкернĕ ĕнер каçхине
шыв тĕпне кĕмĕл çĕрĕ?

Кĕмĕл çĕрĕ унта
нумайччен йăлтăртатрĕ.
Эп шырарăм чунтан.
Ĕмĕте юшкăн татрĕ.

Юшкăн татрĕ умри ĕмĕте.
Шăплăхра темле сас ахăлтатрĕ...
Хĕрринчех çакăн пек йĕпетет,
шаларах—тĕпсĕр-тĕр, сакăлта-тăр.

Эп кĕместĕп хура авăра,
сиккипе вĕçтереп ялалла.
Эс каймастăн килне, эс юлан,
ват йăмра...

## МАНМĂП САНА

Ĕнтĕ вăхăт иртет, вăхăт иртет,
юрламасть тăри те уй-хирте.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

Кайăк хурсем вĕçрĕç кайри мала.
Ĕнтĕ уйрăлатпăр, каймалла.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

Сад пахчи виç хутчен çеçке тăксан,
сар хĕвел пек килĕп çаврăнса.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

## ВУТЧУЛЬ

Ман алăра вутчуль.
Ăна манса,
тăратăп эпĕ
шухăша кайса.

Çулу тивсен,
вутчуль илет хăват—
хĕлхем йăлтăртатать,
кăвар хыпать.

Сана эп куртăм та,
тен, сисрĕн пуль,
чĕрем хĕлхем сапать,
чĕрем — вутчуль.

## ЧЕЧЕК, ХИРТИ ЧЕЧЕКĔМ

Чечек, хирти чечекĕм,
сана ăнланма çук:
çилпе пăшăлтататăн,
юман çинче куçу.

Чун-чĕрӳне кашниййĕ
хăйне тĕрлĕ аван.
Хăшне, хитре чечекĕм,
суйлатăн кăмăлтан?

Пĕлеп, çил икĕпитлĕ:
хăш чух йăпăлтатать,
тепрехинче—йăлт урăх—
хаяррăн харкашать.

Çĕре тымар яман вăл.
Чечек, эс çĕр ачи.
Шутлатăн-ши, чиперĕм,
ултавçă мар-ши çил?

## ÇУРХИ УЙĂХЛĂ САД

Шурă уйăхлă садăм,
садри яштака хурăнсем,
мĕн тери эп сире юрататтăм,
пĕр çынна чĕререн ĕненсе.

Аллея тўлек те капăр.
Тĕлĕрет çутă-тĕттĕм тĕнче.
Қалаçмасăр хуллен çеç утатпăр.
Халĕ çав ыр каççем ай... инçе.

Халĕ çавă çынна эп мансан та,
чĕререх юмах пек вăхăтсем—
çурхи уйăхлă садăм,
садри яштака хурăнсем.

## ХУНАРСЕМ

Қаç та пулчĕ. Тĕттĕм урамсем
шăппăн çеç хитре юмах яраççĕ.
Юмах майĕн йăлтăр çуталаççĕ
юпасем çинчи ыр хунарсем.

Хунарсем, каятăп, сывă юлăр,
çĕрĕпех çапла ачашшăн кулăр.
Çамрăк чунăмри çут хĕвелсем—
хунарсем.

Темĕскер калаççĕ мĕлтлетсе.
Эпĕ те вара мĕлт! куç хĕсетĕп,
алăка уçса киле кĕретĕп,
çывăрма хушаççĕ пуль тесе.

## УЛТШАР ЙĔРКЕН

I

Тусăм, эс çурт лартрăн леш енне.
Хывасах пулать пуль каçмине?
Каçмине хывсан, хыв çӳçерен,
вăр-вăр авăнтăр каçмассерен.
Тус тăван-тăк, ту лайăххине,
чунну савăнтăр курмассерен.

2

Çӳллĕ тусем çинче çӳллĕ кĕлет,
кĕлет тавра чĕнтĕр аван килет.
Чĕнтĕрте вĕт кайăк нумай çавтер,
алтуйипе çапса ан вĕçтер.
Ирхине те килеп, каç та килеп,
сивĕ сăмахпала ан пистер.

3

Çурхи шыв юхать сăрт айĕпе,
шăнкăртатса выртать майĕпен.
Нумаях та юхмĕ вăл, ара?
Ухса юлăр шурă тутрăра.
Нумаях та тăмăп, кайăп эп—
курса юлăр савнă тусăра.

4

Виççĕ иртрĕм сирĕн умăрпа,
каçхине эп иртрĕм купăспа.
Пĕринче шик! шăхăртăм хытах,
văратасшăн пултăм ыйхунтан.
Văранман пулсассăн, văранса юл,
шăнкăрав пек сасса илтсе юл.

## ЮРĂ

Хĕрачасем юрлаççĕ юрă,
эп юрататăп итлеме.
Хăш чух хавас, хăш чух салхуллă
пулса каять чун-чĕреме.

Хура куçли ытла та çепĕç,
ытла та тунсăхлă юрлать.
Юрланине итленĕçемĕн
асра ĕмĕрлĕхе юлать.

Вăл — юрăç мар, вăл хăй ыр юрă:
хăш чух кулать е макăрать.
Хăш чух хавас, хăш чух хăюллă,
хăш чух хастарлă та кăра.

Ăна илтсессĕн, ман, мăнтарăн,
кÿреннĕ чун та çĕкленет.
Хам уншăн юрă пулаймарăм,
хускатаймарăм чĕрине.

Çырупа пĕрле тюльпан чиксе эс янă.
Эс тусем çинче ăна пуçтарнă.

Кӑнтӑр ҫуркуннин ӑшӑ саламӗ —
инҫетрен вӑл килнӗ, тунсӑхланӑ.
Тин ҫеҫ татнӑ тейӗн, чӗп-чӗрех,
ӑшӑ туйӑм—манӑн чӗрере.
Эсӗ кам: Наада, Хамаспюр?
Е ман хамӑн урӑх пери пур?
Урамра вӗҫет—те юр, те мамӑк?
Юрату мӗскер: ҫӑтмах е тамӑк?
Ӗнтӗ мӗн пулсан та, ҫурҫӗрте ҫуралнӑ,
Шираэра эп ӑрӑскал шыраймӑп.
Сывӑ пул, тӑванӑм, сывӑ пул.
Чӗремре тюльпан, чунра шур юр.
Пуҫӑмра тем чухлӗ шухӑш пур.
Курасах тесессӗн, килсе кур.

## ҪӐЛТӐР

Миҫе хутчен сана ҫухатрӑм,
ал султӑм шанчӑк пӗтнӗрен,
мӗн чул кӗллентӗм, ӗмӗт татрӑм,—
эс тупӑнатӑн ҫӗнӗрен.

Эс тупӑнатӑн, йӑлкӑшатӑн
унччен-хинчен маттур, хитре,
яланлӑха асра юлатӑн
кашни тӗл пулнӑ сехетре.

Сананни пек йӗркеллӗ кӑмӑл
ҫуках-тӑр пӗтӗм тӗнчипе:
типтерлӗ, ырӑ, ҫутӑ, ҫӑмӑл,
хаваслӑ, ҫулӑмлӑ... чипер.

Туртать мана вӑл чарӑнмасӑр
асамлӑ вӑй туртӑмӗпе.

Эп кашнинчех, эс çухалсассăн,
туятăп пурнăç пĕтнĕ пек.

Вылятăн эс, вылятăн лайăх,
пĕлместĕн хăв вылянине.
Нивушлĕ сӳнĕн те тупаймăп
сана эп урăх ĕмĕрне?!

## ВĔРЕНЕ

Ӳсет кунта сирень те çĕмĕрт
ку чухне.
Пăхмастăн эсĕ.
Эс шыратăн вĕрене.

Ларать кунта хăватлă дача.
Эс, ара,
темле пĕр пĕчĕкçеççĕ
пӳрт шыран.

Епле хитре
типтерлĕ ен лере.
Эс çăвăнасшăн
çакă симĕс пĕвере.

Кил пăрăнса,
куран вĕт — вĕлтĕрен.
Утан тӳрех.
Мĕне çак пĕлтерет?

— Пӳртре виç хĕр пурнатчĕ
амăшĕпе.
Çавтер эп туслăччĕ
кĕçĕннипе.

Ларattămăр килсе
пĕве хĕрне.
Иртес пек марччĕ яшлăх
ĕмĕрне.

Халь çавă пÿрт, çав хĕр—
хăш тĕнчере?
Сукмак çине те шăтнă
вĕлтĕрен.

Вăл вăхăтри
эп хам та халĕ çук,
пĕр кун пек иртрĕ
çирĕм икĕ çул.

Анчах хăрман, ав, кур,
кармашнă тÿпене
çав хĕрпеле эп лартнă
вĕрене...

## ШĂПЧĂКСЕМ...

Шăпчăксем иленнĕ тиреке,
ларнă пулĕ тетĕп çĕрĕпе.
Çакă туссем патне килтĕм те
кăмăлăма ятăм ирĕке.

Ма хăпартăм çÿллĕ ту çине—
пусас марччĕ çĕлен пуç çине.
Чĕлхе-çăвар хытă, çемçе мар,
хăвартăм пуль туссен кăмăлне.

Кăмăл кăна теççĕ, кăмăл çав.
Ăна пула инкек çак пуçа.

Уçмăттăмччĕ чуна, йывăр-çке
унсăр пурăнмашкăн пурнăçа.

Шăпчăксем иленнĕ тиреке,
тирекĕсем кайнă ирĕке.
Манăн та каяс пуль килелле
унччен утса килнĕ йĕрĕмпе...

## ЧУН

Шанчăк, эс сăрт мар, ан ван, ан ишĕл.
Хăшĕсем пиртен кăшт кулĕçин,
шăппăн савăнар-ха чун пурришĕн—
чунлă çын, çапах та,—чунлă çын.

Шăппăн шухăшлар-ха. Эс ан тĕлĕн:
чун тенийĕн палăрăм нумай.
Чун пулать тееççĕ хĕрĕх тĕрлĕ.
Хĕрĕх тĕрлĕ çеç-ши? Çук. Ай-хай!..

Палăрăмăн тĕсĕ йышлă питĕ.
Кашни тĕс çĕр тĕрлĕ ялтрасан—
электрон шутлавлн машини те
кăлараймĕ, тусăм, шутласа.

Ялтăратăр çеç-и чун,—янратăр!
Чун пурнать-тĕк, çын та пурăнать.
Чунлă çын йăваш, хастар та паттăр.
Ăна çеç пур йывăр парăнать.

## ПĔР ХĂЙШĔН ÇЕÇ...

Пĕр хăйшĕн çеç пурăнакан çынна,
эй, пурнăç, тыттарсамччĕ катăк пуртă.

Юратура та хăйшĕн çеç çунать,
хăй сыв пулсан,
тепри кирек мĕн куртăр...

Чĕререн мар сире ыр кун сунни,
çунмасăр çеç юрлать вăл юррине те.
Нимех те çук ун чунĕнче чăнни.
Шанмастăп кулнине те, йĕнине те—
калаçма мар, пăхма та йĕрĕнетĕп.

## ЛАЙĂХ ÇЫН

Усал çынсем тĕлне пуласран
сыхла, теттĕм, мана, талисман.
Усалсенче ырă шырамарăм,
талисман-çĕррĕме хывмарăм.

Ырăсенчех эпĕ ыр шырарăм,
хăшпĕринче ăна тупмарăм.
Нумай-нумай çĕре эп çӳрерĕм,
санран лайăх çынсем курмарăм.

Ырă эсĕ ырă çынпала—
çурмалла мар, мĕнпур чунпала.
Лайăх эсĕ, анчах—шĕл-кăвар,
шĕл-кăвар пулин те, ăссăр мар.

Никама та хальччен пуççапмарăн,
йывăр килсен, пуçна усмарăн,
нумай-нумай çĕре эс çӳрерĕн,
аçу-аннӳ ятне ямарăн.

## АВĂТАТЬ-ШИ КУККУК?

Авăтать-ши куккук, авăтмасть-ши
чĕпписемсĕр ларнă вăхăтра?
Аннем, хăй çеç юлнă самантра,
асăнать-ши пире, асăнмасть-ши?
Асăнать пуль вăрăм çĕрсенче,
кулянать пуль шурăмпуçĕччен.

Авăтать-ши куккук, авăтмасть-ши,—
пурпĕр пухăнмаççĕ чĕпписем.
Пухăнаççĕ ман пĕртăвансем.
Савăнать-ши анне, савăнмасть-ши?
Савăнать-çке пĕтĕм чунĕнчен,
макăрать-çке халăх умĕнчех...

## АТТЕПЕЛЕ АННЕ ÇУРТĔНЧЕ

Улма йывăç тавра çаврăнса,
хĕрлĕ хĕвел тухать ярăнса,
каллех тӳпенелле çул тытать,
атте-анне çуртне çутатать.

Аттепеле анне çуртĕнчен
чун хурланать тухса кайнă чух.
Чун хурланать, нимле чарма çук.
Темшĕн ĕнтĕ çапла — кашнинчех.

Пĕлейместĕп халь те мĕншĕнне,
нумайччен пăхатăп кил çине.
Эп каллех каятăп аякка,
хĕвел мар та, пурпĕр килĕп-ха.

Хĕвел мар та, çитĕп çаврăнса,
хĕпĕртӳллĕн утăп ярăнса,

çупăрлăп-ачашлăп аннене,
ал парса пуç тайăп аттене.

Иккĕшĕ те пĕчĕк ача пек
савăнĕç эп килнĕ ячĕпе,
вăйсăррăн çуталĕç именсе,
именсе те шăппăн тĕлĕнсе.

Аттепеле анне çуртĕнче
чун хурланать килсе кĕнĕ чух.
Чун хурланать, нимле чарма çук.
Темшĕн ĕнтĕ çапла... кашнинче.

## ĂСАТУ

Чĕнтĕрлĕ кĕперĕн карлăкĕ—
улма йывăççисен турачĕ.
Саманамăр çаплах тăнăç тăрсан,
эпĕр — атте-анне палăкĕ,
эпĕр — атте-анне çуначĕ.

Кам-ши çут тĕнчере чи ăсли,
кам-ши çут тĕнчере чиперри?
Çакă çут тĕнчере çын нумай,
хамăр атте-анне чи хакли,
хамăр атте-анне чи ырри.

Қала, пыл çук-и те çу çук-и
аттепеле анне çуртĕнче?
Аттепеле анне çуратмасан,
эпĕр курас çукчĕ кун çути,
эпĕр курас çукчĕ çут тĕнче.

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет,—
кĕмсĕртетнĕ сасă илтĕнет.

Ан кулян-ха, атте, ан йӗр, анне,
пулинех те пирӗн ҫулӗ инҫе,
ан ӑсатӑр, тумӑр йӗпенет...

## ТУНСӐХЛӐ ВАЛЬС

Хӗвел анса пытаранчӗ...
Тӳпе хӗрри вутра
кӗрхи Аксу урамӗнче
каҫ пулнӑ вӑхӑтра.
Сив ҫумӑр пӗлӗчӗсене
сӑнаҫҫӗ хунарсем,
ним те чӗнмеҫҫӗ вӗсене,—
ҫунаҫҫӗ хӗмленсе.

Чарусӑр ҫил сирет ҫулҫа...
Ҫук манӑн савӑнни:
урӑххипе ҫӳрет пуль ҫав,
килмерӗ чун савни.
Мӗскершӗн туслӑх татӑлчӗ?—
кичем ҫак самантра
кӗрхи Аксу урамӗнче
каҫ пулнӑ вӑхӑтра...

Хурласассӑн, ӗлӗк питӗ хурланаттӑм,
пӗвӗмри пур клетка, пӗтӗм атом
вӗреме кӗретчӗ. Вӑй-хӑватӑм
тӑвӑл пекчӗ. Симӗссӗн-кӑваккӑн
темӗнччен асатчӗ аслӑ тинӗс.
Шӑплансан та лӑпланас теместчӗ.

Мĕн вăл хурлану, мĕскер сехмечĕ?
Ма эп халь кирек хăçан та тикĕс?
Çĕнессе ытла ĕненнĕрен-ши,
хурлакан çыннах килĕштеретĕп,
сывăхах хăш чух илештеретĕп?
Е çул иртнĕ май ăс кĕнĕрен-ши?

## ИКПĔРПЕКЛĔХ

Тимĕр-бетон кĕпер, чул юпа,
çĕр машшин каçсан та, авăнмĕ.
Çĕр машшин каçса та авăнманне
пĕр машшин каçнипе авăнмĕ.

Çакă çамрăк пуçпа, яш чунпа,
çĕр çын хурласан та, хур пулмăп.
Çĕр çын хурласа та хур пулманне
пĕр çын хурланипе хур пулмăп.

## ШӐТ

Çӳлтеех вĕçекен тăрнисен
çĕлен çипрен çинçе мăйĕсем.
Хӳхĕм шерпет сыпнă йĕкĕтсен
панулмирен хĕрлĕ сăнĕсем.

Пĕлмен «кĕпĕрнаттăр» килессе,
кĕленчерен кĕпер хывас-мĕн.
Пĕлмен туссем çапла хĕрессе,
лимонад çеç лартса парас-мĕн.

## ÇАМРĂК ЁМĔР

Пысăках мар пахча, чие пахчи.
Аван иккен ларма шăплăхра.
Çинçеех те пĕвĕм, хура куçăм
хитре иккен çамрăк вăхăтра.

Чун савăнса кăмăл çĕкленнĕрен
сĕрме купăс илтĕм аллăма,
пĕр хĕр илттĕр терĕм, савтăр терĕм,
тухрăм каламашкăн урама.

Анчах хĕре кĕввĕм килĕшмерĕ,
кĕмĕл çеç çав хĕлĕх, ылтăн мар.
Килĕшетчĕ те пуль, вăхăт иртрĕ,
çамрăк ёмĕр иртрĕ, мĕн тăвар...

## ХУРА ЧĔКЕÇ

Хура чĕкеç
кĕр каять, çур килет,
пӳрт çамкине йăва çавăрать.
Кĕр килеймĕп, тусăм,
çур килеймĕп,
пĕр кайсассăн—
текех килеймĕп.

Хура чĕкеç
кĕр каять, çур килет.
Хурлантарса умра явăнать.
Кĕр кайминччĕ чĕкеç,
çур килминччĕ,
пĕр кайсассăн—
пачах килминччĕ...

## ЫТАРАЙМИ

Самант тени ялан ытарайми-ши
е хăш чух çеç ытла ытарайми?
Мана ан ятлăр эп çапла ыйтнишĕн,
хам кăмăла хам пултăм юрайми.

Мĕнле самант-ши вăл кĕске е вăрăм?
Çакна ан ыйтăр ешĕл яшсенчен.
Мăн çынсенчен ан ыйтăр, кĕтсе тăрăр
кăштăртатса хăй ватлăх тухиччен.

Нумай чухневаскатпăр сисеймесĕр
кĕске самант мĕскер вăл иккенне.
Мăкăртатса çӳретпĕр, тӳсеймесĕр
çав ватлăха, вăл çитнĕ-çитменех.

«Вăрах самант — кичем, час хăнăхатăн,
хăнăхнăçем чуна йăлăхтарать,
йăлăхнăçем — писетĕн, тарăхатăн.
Тарăхнăçем — пусать те уртарать».

Яш чух ачалăх шелччĕ. Çитĕнсессĕн,
шелле пуçларăмăр çамрăклăха.
Чун ватăлмарĕ çитмĕле çитсессĕн,
тăхăрвунра пĕлмерĕ ватлăха.

«Татах пурнасчĕ»,—терĕ вăл асаплăн.
Тĕлĕнмелле самант вăл — пурăнни!
Иккен, мĕнпур ытарайми—самантлăх!
Иккен, мĕнпур самант—ытарайми!

## НУМАЙЛĂХА-И?..

Шутлатăн та, тĕлĕнмелле кив çĕнĕлĕх:
нумайлăха-и эпĕр хăнара?
Килте пурнатпăр пуль яланлăх, ĕмĕрлĕх.
Мĕн-ма çапла — пĕлетĕр хăвăрах.

Пурнатпăр пек. Иртет пит хăвăрт, пăхăр:
ачалăх, яшлăх, вăйпитиллĕ вăхăт.
Мĕн тумалла? Пыратпăр ватăлса.
Мĕскер вăл ватăлăх — пĕлетĕр хăвăр.

Анчах пĕлместĕр, пĕлмĕр нихăçан,
епле лăскать, касать çак йӳç пахалăх
мана, иртми пахалăх пулнăран!
Асчах калана: пурăнăç — хăналăх.
Вара... киле каятпăр-шим кайран?

## КАÇХИ ХУЛАРА

Утатăп эп бульварăн-тротуарăн,
пырса тухап çынсем нумай çĕре.
Куçа лăпкать йăваш та лăпкă фара.
Çывăхăмрах ачашшăн тем çӳрет.

Пĕрре килет, тепре килмест утассăм
каçхи чăштăртатуллă тĕнчере:
каять пек чи кирли, каять тăхтавсăр;
çывăхăмрах ачашшăн тем çӳрет.

Мĕскер-ши вăл, чăн-чăн кирли? Пĕлесшĕн
ăна, ăш çуннăран, эп çав тери.
Каçармĕ, вăрçĕ-ха мана пĕчченшĕн,
кулянчăк çын ку, тейĕ хăшпĕри.

Час-час мĕн пек çут çăлтăрсем ӳкеççĕ,
сĕм пĕлĕтсем хупласçĕ уйăха.
Хальччен çавна курман иккен тиркевçĕ.
Курман пулсассăн — курĕ, туйĕ-ха.

Ах, уйăх, уйăх, ĕмĕрхи асамçă,
шăрантарса пăхать çӳл тӳперен.
Неон пуканесем умра выляççĕ.
Çывăхăмра... ачашшăн тем çӳрет.

## ХĔР ЮРĂÇĂ

Асамлă юррусем чуна пырса тивеççĕ.
Çут ĕмĕт çуратан эс чĕрере.
Калаççĕ пурте: савнăçлă вăл, теççĕ,
юрла-юрла, теç, ĕмĕр ирттерет.

Тасан та килĕшӳллĕн, çуттăн, ыррăн
сассу ялан çынсемшĕн янăрать.
Анчах та тăхтăр... савнăç çеç-и юрă?
Хĕнпе асап сахал-и юрăра?

## ПИРĔН УМРА

Пирĕн умра — лаштра хурама.
Лартăм эпĕ тухса урама.
Савнă тусăм килнĕ вăхăтра
тăтăм ура çине юрлама.

Тусăм, кил, савам-ха чуптуса,
шур уйăха хирĕç тăратса.
Виç кун кăна мар, виç уйăх мар,
çичĕ çул çӳрерĕм юратса.

Сакăрвунă сакăр кĕввĕме
саккăм çине сарас терĕм эп.
Кĕвĕ сакă çине сарăнмасть.
Савни çын сăмахпе сивĕнмест.

## ЮРЛАНĂÇЕМ

Юрламăттăм çакă юррăма,
юррăмçăм йăпатать тусăма.
Аллăма юратса суллamastăп,
çĕррĕме юратса суллатăп.
Юррăма юратса юрламастăп,
тусăма юратса юрлатăп.

Паян ирех килсе çитмен пулсан,
кам куçĕнчен пăхса юрлăттăм?
Алла хĕрӳн кама пырса парса,
кам хулпуççи çине хурăттăм?

Шухăшласа юрă юрлакан
хăй те ыр çын ачи пулакан.
Шухăшла-шухăшла эпĕ юрлатăп,
ялан сана, тусăм, ырлатăп.

Шăлса тыт курнитсу урайне
панулми кустарса выляма.
Вĕренсе юл юррăм кĕввине
эпĕ асна килсен юрлама.

Эпĕ санăн асна килес çук,
эсĕ манăн асран тухас çук.
Юрламăттăм çакă юррăма,
юрланăçем ырă — чунăма.

## САЛТАК ЮРРИ

Ҫаврӑшпуҫ урамӗ кукӑр-макӑр,
сар ҫӑка кашни кукрийӗнче.
Сывӑ пул, аннеҫӗм, эс, ан макӑр,
ывӑлу патшалӑх аллинче.
Сар ҫӑки ыр шӑршипе астарӗ
ирсерен чипер саркайӑкне.
Саркайӑкӗ ларӗ, чӗп кӑларӗ,
кам-ши итлӗ унӑн юррине?
Эс мана ӳстертӗн, ҫупӑрларӑн,
илтсе юл халь ывӑл сассине—
вӑл каять ҫӗршывӑн чиккине...

## КӖТӲПЕ СЫВПУЛЛАШНИ

Сисмерӗмӗр — сар кӗркунне те ҫитрӗ.
Кӗтӳ, сыв пул, чим... ма кӗшӗлтетен?
Атте сывалчӗ:
«Сывлӑх халь,—тет,—ҫирӗп,
эс кай, вӗрен, эп ҫӳрӗп майӗпен».

Сыв пул, кӗтӳ. Йӗтем ҫитсе курам-ха,
вара ҫитем кӑшман ани ҫине.
Тӑван тавралӑх! Савӑнӑҫ урхамахӗ
чӗвен тӑрать, хаваслӑн кӗҫенет.

Тӑван уй-хир, сырма, кӑтра юманлӑх,
ҫатма пек такӑрланнӑ аслӑ ҫул,
чуна яланлӑха кӗрсе юлмалӑх
янравӑр сирӗн иксӗлми тем чул.

Ялтан кайма тивсессӗн, эп пӗлетӗп:
ачалӑх, яшлӑх ҫутисем, сире
хампа пӗрле талисман пек илетӗп—
упранӑр ҫӑлкуҫ пек таса, хитре.

## ПӖРТЕН-ПӖР ПУРНĂÇĂМ...

Эс çамрăк, ватăлса курман.
Тен, çавăнпа текех юрлатăн:
«Юратнă яшлăхăм пур ман,
пӗр ăна çеç ялан юратăп.

Куллен тăрсанччӗ çуркунне,
сипетлӗ çумăрсем çусанччӗ,
сирень çурсанччӗ çеçкине,
ваш варкăшсанччӗ чун çуначӗ,

кӳренмӗттӗм пурнăçăма
унта çитменлӗхсем пурришӗн,
тав тăвăттăмччӗ эп ăна.
Вăл... пурăнăç... пӗрре пуриншӗн».

Çапла. Такамшăн та пӗрре,
анчах, хуплать те ăпăр-тапăр,
хăтăлаймасăр, чиперех
хăш чух эпир çавна манатпăр.

Манса, калатпăр: «Кулленех
çурхи лӗп çумăрсем çусанччӗ,
сирень çурсанччӗ çеçкине,
ваш варкăшсанччӗ чун çуначӗ...»

Анчах лӗп çумăрсем — сайра,
садсем куллен çеçке çурмаççӗ.
Çанталăк пăсăк хушăра
ваш варкăшмасть-мӗн чун çуначӗ.

Сана эп вăрçтарса курман,
хавхаланса пӗрле юрлатăп:
«Пӗртен-пӗр пурнăçăм пур ман,
кирек хăçан ăна юратăп».

## МĔН ХИТРЕ

Хупрăм та куçа — урам çухалчĕ,
уçрăм та: каллех — куç умĕнче.
Мĕн хитре çак уйăх çутинче?—
çырмара кăвакалсем юхаççĕ,
сарă хĕр юрлать çыран çинче;
тухăçра хĕвел ури куратăп—
халь ярса пусасшăн пек тăрать;
çут тĕнче кулать тăнăçлăхра;
эп тĕнче ытамĕнче кулатăп,
калăн, çут тĕнче — ытамăмра.

## ШЫВ ÇИНЧИ УЙĂХ ÇУТИ

Киле васкарăмăр, чупса.
Пăч-тĕттĕм çырана çитсессĕн,
эп тăтăм шăппăн чарăнса—
вăрман енне каçса ӳксессĕн.
Эй, тусăмсем! Эй, мур ачи!—
мĕскер куратăп, мĕн куратăп:
çиçсе выртать асам тĕнчи.
Тĕлĕннипе шанках хытатăп.
Шыв лăпкăн юхнă май, ун çийĕн
пин-пин хĕлхем ташлать-сикет.
Çав çутăсен ыр çавраçилĕ
чуна лăпкать те илĕртет.
Ак ĕнтĕ темĕнле хăват
савăнăçа лăскарĕ-çапрĕ.
Куратăп: çутă чакрĕ, чакрĕ.
Мĕн пулчĕ? Мĕн тума чакать?
Тăхта! Чакать? Çук, çук, чакмасть.
Татах çуталчĕ те ялтрарĕ,
хаваслăхпа çиçсе вылярĕ.
Çыран çеç — тĕттĕм те чапрас.

## СТРОЙОТРЯД ГИМНĔ

Кам романтик? Студент. Пытармастпăр.
Туссене пăрахмастпăр хĕнре.
Арăскал çук тесе макăрмастпăр.
Арăскал — кĕрешÿллĕ ĕçре.

Кам пире ылтăнпа кĕтсе илчĕ?
Мĕн кунта илсе килчĕ, кала?
Çитрĕмĕр — вĕçĕ çук çеçенхирччĕ.
Халь пăхсан — ÿснĕ-ларнă хула.

Утăмсем çулсерен маттурланĕç,
çирĕп пулĕç мĕнпур вăхăтра.
Пирĕн йăх — уйрăм йăх. Кам ырламĕ
çĕр çинчи «Çерем çĕр» çăлтăра?

«Сыв пул» мар, «тепреччен», теп анчах эп.
Килес çул таврăнатпăр кунтах.
Çерем çĕр, иксĕлми ĕç вучахĕ,
эс чунра та — яланлăх вучах.

## ПРАГА ХĔРĔ

Поэма

Пăхан кÿреннĕ ача пек.
Ӳкерчĕкре те эс чĕп-чĕрĕ.
Чунсем пĕрлешнĕ ячĕпе
парнелеймерĕм ылтăн çĕрĕ.
Чуптăваймарăм. Ан вăтан.
Çулсемваскарĕç, иртрĕ вăхăт.
Çапах та эсĕ манăçман,
манăçман пек ман пĕтĕм тăхăм.
Илсе çÿретĕп хампала,
тутунтанах халь чуптăватăп.

Аюх! тесе эс ан кала—
хальччен сана савса мухтатăп.
Хальччен янрать сассу чунра,
чуна типсе хăрма памасăр,—
ман юлашки юратура—
пĕтсе лармасăр, ылханмасăр.

## 1

Шăпланчĕ Прага ĕнтрĕкре.
*Р. М. Рильке*

Ķарл Ķĕперĕн карлăкĕ пит капăр,
сыпăкран-пĕр—палăк хуралта.
Шухăшра çеç ćанпала утатпăр,
чăннипе—эп пĕччен ех кунта.
Тĕлĕрсе юхать асамлă Влтава.
Шăппăн куç хĕсеççĕ çутисем.
Юлашки юмахăмçăм, ултавăм,
Прага хĕрĕ, эс те тĕлĕрсем.
Тĕлĕкре мана курас тееймĕн—
манран мар ҳĕрелтĕн вăтанса.
Мĕн тери çут куçусем телейлĕ,
мĕн тери именчĕк те таса.
Пирвайхи тĕспе çиçсе вылятăн.
Саншăн пурнăç—савăнăç, уяв.
Пуç тавра шутларăм та кулянтăм:
мĕн тери иккен шăпам хаяр.
Малтанах—чăн чĕрĕлтĕм, вĕрерĕм;
лăпланса пусарăнтăм унтан.
Малтанах—ăсран каяп пуль терĕм,
пăхрăм та, юмах-мĕн çак, ултав.
Вилес умĕн сывлăх лайăхланнăн,
юлашки кĕрлерĕ пуль чĕре.
Çывăр, Анна, тутлă çывăр, Анна,
тĕлĕкре те уяврах çӳре.

2

Темĕн те пур Ылтăн Прагăра.
Юрлакан фонтан, курант, корона.
Çич çăра коронăна упрать.
Пĕр рубинĕ ун вуншар пин крон-мĕн.

Пур Градчаны тенĕ вырăн, Витков сăрчĕ,
тĕрлĕрен кермен те замок, пантеон.
Пур улах та лăпкă хăна çурчĕ.
Шыв çинче вăл, «Рацек»—ячĕ ун.

Уйăх çутинче çынсем мăкăртатаççĕ,
кайăк кăвакалĕ нартлатать,
пулăсем пире курма тухаççĕ,
тăрăх та пăхаççĕ, урлă та.

Шыв çинче хуçкаланать мĕлкемĕр.
Темĕн те пур ман астумалли.
Чи хакли çапах та м ĕ н? Пĕлетĕн.
Эсĕ, тусăм, эсĕ—чи хакли.

3

Пилĕк сăрт çинчи
пыллăхри хула,
килти пек туяп,
чăт, ан хăвала.
Пилĕк сăввăмра
киленсе пиллем
сывлăх, пархатар,
иксĕлми илем.

Сăруна ĕçсе
маттурлантăм эп.

Пикӳне курса
çамрăклантăм эп.
Илĕртет сăра
шур кăпăкĕпе.
Ӳсĕртет пике
йăл-йăл куллипе.

Шуранка çӳреп
шухă пуçăмпа.
Сасăсăр йĕреп
хурлă куçăмпа.
Пĕлейместĕп-и
тĕлĕ-йĕркине,
мĕн чарать ĕçме
савăш куркине?

4

Европа варринче çухалчĕ манăн канăç:
мĕскер çитмест миллиардер сынна,
ма вăрçăшăн çунать? Ма çуратмасть-ха Анăç
хитре хĕрсем, чăн поэтсем кăна?

Ăçта чун сӳллĕшĕ? Эс ăслă хĕр, тăванăм.
Куçусенче илемлĕ шухăш сан.
Чун-чĕрӳнти капланнă туйăм тарăн.
Талпас яшсем çине эс ан пăхсам.

Эс ху—кунта, таçта лере—Морави.
Морависĕр эс вилĕн хуйхăрса.
Тăван çĕршывшăн пур вăя хурар-и,
кирлех пулсан, парар-и пурнăçа.

Эп килтĕм ыр сунса. Ах, сапăр тăвăр.
Кунпа çеç пĕтмĕ тус-тăван юрри.

Эп кӗвӗлерӗм; Прага, пилӗк сăвă—
кашни сăртнă пӗр палăк пултăр-и.

Ҫăмăлăра—мухтав, тесе юрлатăп,
чечен хула, хавасла хӗрача.
Юрланă май тăванлăха ырлатăп,
ҫак ҫут тӗнчешӗн хытă хăраса.

5

Таса куҫҫуль сентименталлӗ мар.
Чун кӳтнипе йӗрекенсем сăваплă.
Хальрех кăна сана эп палламан,
халь, ак, питне куҫҫульпеле ҫăватăн.

Епле маттур эс, пиҫӗ, яштака.
Епле эс ҫамрăк, йӗкӗт пек хастарлă.
Тăван килтен каяссăн салтака,
ҫӳҫне те йӗкӗтле хитре кастарнă.

Ҫат тытакан шур блузки—тамаша.
Ҫат тытакан хӗр брюкийӗ. Ах, мода...
Сана питрен пăхма эп тăрăшап,
чăрлаттарса пăхатăн эсӗ ху та.

Чӗрӳ сикет сан кайăк чӗппилле.
Ҫуҫ хăрпăкӗ—хитре, хура та вăрăм.
Юлашки хут сăмах ман чӗнмелле—
ҫул айккинче ална сӗлтсе час тăрăн.

Черченкӗ эс, хăратăп сӗртӗнме.
Сыв пул теме чунтан-вартан хăратăп.
Сыв пул, сыв пул. Ҫаятăп килӗме.
Ӗмӗрлӗхе ҫакна асра хăварăп.

Ун сӳнмӗ çуламӗ мӗн ӗмӗрне.
Вӑл çутӑлнӑ мана телей кӳмешкӗн.
Тепре курмашкӑн пӳрнӗ е пӳрмен?
Е çырнӑ çаплипех çӗре кӗмешкӗн?

Вилме выртсан та, вилӗм умӗнче
телейлӗ вӑхӑта умра укалӑп,
тек пӑшӑлтатӑп юрату çинчен,
сана каламанне çырна эп калӑп...

## ЭПИЛОГ

Ах, Прагӑна каллех каяс килет ман...
*М. Цветаева*

Йӑлтах—пурте—яланлӑха—пӗтет, иртет,
анчах унта, аллейӑсен сулхӑнӗнче,
е шавлӑ площадьре, е шав çукрах çӗрте,
çаплах куратӑп-ха, куратӑп халиччен—
хама. Тен, хам вилсен те, чылайччен,
пӗр çул, ик çул, вун çул, çӗр çул,
эс пулнӑ, эс çӳренӗ çӗрсенче,
шеллевсӗр ӳкӗнӳн чи çӳллӗ сӑртӗнче,
пуç янӑ мӗскӗн пек, тем шырӗ чун.

Хӗвеллӗ тӗтрере такам тасҫта уткалӗ.
Ҫаҫ-ҫаҫ, çап-çутӑ уйӑх çӗкленсен,
çӗклениччен те, вӑрттӑн курӑнкалӗç
темле сӑнсем, тӗссем те мӗлкесем.
Тем пӑшӑлтатӗ, кӑштӑртатӗ, çӗтӗ.
Чун çеç—каллех—пӗртен-пӗр—
юлӗ шӑплӑхра.
Чунсен пӗрлешӗвӗ—телейӗм—ылтӑн çӗрӗ—
юмах пулса, чыс курӗ халӑхра.

Ах, Прага, Прага...

## МАРТРИ ХĔВЕЛЛĔ ХИР

Ялан килте ларас темесĕр
ĕçрен пушанна вăхăтра
ăçта тухса чупатăр эсĕр,
ăçта сывлатăр лайăхрах?

Уя тухса уйпа уткалăр
хĕвеллĕ, çиллĕ кунхине,
çултан тухса хавас пускалăр
шак хытă хытнă юр çине.

Тӳррен ашса сукмак тупсассăн,
кайса текех вăрман енне,
курса йăпанăр юр тусанĕ
епле хир тăрăх юхнине.

Юхать вăл çырмана, яла...
Хир варрине пырса çитсессĕн,
вăрман патнех ан кайăр эсĕр.
Çаврăнмалла анăçалла.

Унта—юрпа хĕвел çути.
Унта, çӳлте, кăшт сăртарах,
ытла çап-çутах мар фонпа,
силленчĕк хурăнсен утти!

Çак лăпкă, ырă сăнлăхпа
эсир тăванлăх пуçаруçăн,
тăрса юлатăр куçа-куçăн
куç виçейми тасалăхпа...

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Тăван тĕнче | 3 |
| Саврăш паттăр | 4 |
| Атăл паттăрĕ | 7 |
| Чăваш çĕршывĕ | 9 |
| Эпĕ çыратăп | 10 |
| Поэтăн çутă сăнарĕ | 11 |
| Тукай | 12 |
| Есенин | 13 |
| Сан вуту патне... | — |
| Çĕр чунĕ | 14 |
| Фестиваль | 15 |
| Вива, Куба | 16 |
| Чили поэчĕсене | — |
| Ан иккĕлен | 17 |
| Уралта | 18 |
| Трактористка | 19 |
| Çарран ачалăх | 20 |
| Юлташ йăмăкĕ | 21 |
| Лантăш | 22 |
| Ирхи юрă | — |
| Пăхма кăна... | 23 |
| Куçсем | — |
| Кĕмĕл серенада | 24 |
| Çурхи фантази | 25 |
| Савни | — |
| «Шурă кĕпе лайăх—ут çулма...» | 26 |
| Августра та | — |
| Чун савни | 27 |
| «Сăрлă çуна сирĕн тĕлĕрте...» | — |

Чунӑмра . . . . . . 28
«Вӑхӑтлӑха кӗрсе тухасшӑн...» . . . . 29
Пульницара . . . . . . —
Вӑрӑм çул . . . . . . 30
Эп кӗтрӗм . . . . . . 31
«Эп сана вӑрçмастӑп...» . . . . . —
Çул çинчен . . . . . . 32
Уйӑх . . . . . . 33
Çеçенхирте . . . . . . —
Ыраш пусси . . . . . . 34
Çыру . . . . . . . 35
Кӗтни . . . . . . . —
Каçхине . . . . . . 37
Медсестра . . . . . . 38
Тунсӑх пур . . . . . . . —
Юраманни . . . . . . 39
Тасалӑх . . . . . . 40
Чечек çыххи . . . . . . 41
Саврӑшпуç . . . . . . 42
Хаваслӑ хӗрача . . . . . . —
Музыка . . . . . . . 43
Çумӑр çӑвать . . . . . . 44
Хӗлхем . . . . . . —
Ылтӑн хӑйӑр . . . . . . 45
Хумсем . . . . . . 46
Авӑр . . . . . . —
Хӗвел аннӑ чух . . . . . . 47
Пӗччен йӑмра . . . . . . —
Манмӑп сана . . . . . . 48
Вутчуль . . . . . . . 49
Чечек, хирти чечекӗм . . . . . —
Çурхи уйӑхлӑ сад . . . . . . 50
Хунарсем . . . . . . —
Ултшар йӗркен . . . . . . 51
Юрӑ . . . . . . . 52

«Çырупа пĕрле тюльпан чиксе эс янă...» . —
Çăлтăр . . . . . . . . 53
Вĕрене . . . . . . . 54
Шăпчăксем... . . . . . . 55
Чун . . . . . . . . 56
Пĕр хăйшĕн çеç... . . . . . —
Лайăх çын . . . . . . 57
Авăтать-ши куккук? . . . . . 58
Аттепеле анне çуртĕнче . . . —
Асату . . . . . . . . 59
Тунсăхлă вальс . . . . . 60
«Хурласассăн, ĕлĕк питĕ хурланаттăм...» . —
Икпĕрпеклĕх . . . . . . 61
Шўт . . . . . . . —
Çамрăк ĕмĕр . . . . . . 62
Хура чĕкеç . . . . . . —
Ытарайми . . . . . . 63
Нумайлăха-и?.. . . . . . 64
Каçхи хулара . . . . . . —
Хĕр юрăçă . . . . . . 65
Пирĕн умра . . . . . . —
Юрланăçем . . . . . . 66
Салтак юрри . . . . . . 67
Кĕтўпе сывпуллашни . . . . . —
Пĕртен-пĕр пурнăçăм... . . . . 68
Мĕн хитре . . . . . . 69
Шыв çинчи уйăх çути . . . . . —
Стройотряд гимнĕ . . . . 70
Прага хĕрĕ . . . . . . —
Мартри хĕвеллĕ хир . . . . . 76

*Для старшего школьного возраста*

**Михаил Сениэль (Михаил Павлович Егоров)**

**НЕСРАВНЕННАЯ**

**Стихи**

На чувашском языке
ИБ 882

Редактор П. Е. Димитриев
Художник Л. А. Кӑчугурова
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Л. Қ. Егорова

Сдано в набор 29.08.80. Подписано к печати 15.01.81. НТ 06003. Формат 70Х90/32. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 2,50. Усл. печ. л. 2,92. Учетно-изд. л. 3,08. Тираж 2000 экз. Заказ № 4673. Изд. № 84. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Қанашское шоссе, 15.

15 пус.



ЧĂВАШ КЕНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ